Космонавтика кунĕ умĕн:
уçлăх паттăрĕсене ятран пĕлетĕр-и? ● 2 стр.

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн
30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

13(883) №,
2015,
апрель/ака,
11

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

● Пахалăхсăр апат-çимĕç те чир сăлтавĕ пулма пултарать. 3 стр.

● Ял халăхĕнчен пуянрахxи çук. 4 стр.

● Сивĕ сăмах калас вырăнне кĕлĕ вуламалла. 5 стр.

● Тăтăшах пăшăрханни сывлăха ан хавшаттăр тесен… 8 стр.

● Купăста яшки йăлăхтарман-ха… 9 стр.

● Раççей актриси Голливуда парăнтарнă. 11 стр.

● Аттесĕр иртнĕ асаплă ачалăх. 12 стр.



Г.ВЕРБЛЮДОВ сăнÿкерчĕкĕ

# Çутă уявпа – Мăнкунпа!

Çуркунне, çутçанталăк чĕрĕлнĕ вăхăтра килет çак ăшă та ырă уяв. Мăнкунра хĕвел те ташласа тухать тесе ахальтен каламан пулĕ. Христос чĕрĕлсе тăнă кун хаваслă та сăваплă... Çав Çуттăн шевлийĕ тата Туррăн таса юратăвĕ пирĕнпе пĕрле çак кун.

Мăнкуна ачаранпах юрататпăр. Хăйне евĕрлĕ ăшăлăхпа çупăрлатчĕ вăл. Ача-пăча ыйхăран вăраннă çĕре атте-анне сăмарта хĕрететчĕ, икерчĕ-кукăль, пÿремеч шăрши сăмсана кăтăклатчĕ. Йăли çапла, Мăнкунра çĕнĕ кĕпе тăхăнтартатчĕç. Касри мĕнпур ача-пăча иртен пуçласа касчене чуччу ярăнатчĕ, урамра тĕрлĕ вăйă вылятчĕ.

Сăваплă уява таса кĕçнерникунран кĕтме пуçлаççĕ. Малтан кил-çурта çуса тасатаççĕ, кайран çăмарта сăрлаççĕ, кулич, кукăль тата темĕн тĕрлĕ тутлă апат-çимĕç пĕçереççĕ. Вырсарникун чиркĕве кайса килнĕ хыççăн çемье уяв сĕтелĕ хушшине ларать.

Ыран – Мăнкун. Сире чĕрĕлсе тăнă Христос хăйĕн иксĕлми тивлечĕпе ырăлăхне парсах тăтăр. Кашни çемьене ăшăлăх, телей, савăнăç, ырăлăх илсе килтĕр çак уяв. Христос чĕрĕлнĕ! Чăн-чăнах чĕрĕлнĕ!

**Елена АТАМАНОВА.**

"Чăваш хĕрарăмне" çитес çурçуллăхра илсе тăмашкăн çырăнтарас тапхăр малалла пырать. Унăн хакĕ кăшт ÿсни – 360,66 тенкĕ – пирĕн çыхăнăва татмасса шанас килет. Хаçат индексĕ: 11515.



**Чăваш Митрополийĕн пуçлăхĕ, Шупашкарпа Чăваш Митрополичĕ Варнава Турра юратакан кĕтÿçĕсене, манахсемпе манахла пурăнакансене, Чăваш Митрополийĕн, Шупашкарпа Чăваш Епархийĕн Вырăссен Чăн тĕнне ĕненекен мĕнпур ачисене Мăнкун ячĕпе саламласа янă çырăвĕ**

"Тÿпе савăнмаллипех савăнтăр, Çĕр те хĕпĕртетĕр; пĕтĕм тĕнче – курăнаканни те, курăнманни те – савăнтăр: Христос ĕмĕрлĕх телей кÿрсе тăрать".

Христос Чĕрĕлсе тăнă çутăран та Çутă, хаваслăран та Хаваслă çак куна пире каллех кĕтсе илмелле тунăшăн эпир Турра тав тăватпăр!

Чунăмăрсемпе чĕремĕрсене паян Мăнкун хавасĕ иксĕлми тултарса тăрать.

Христос Чĕрĕлнĕ!

Çăлакан Христос Хăй ирĕк тусах асапланас умĕнхи каç вĕренекенĕсене каланийĕ: "Эпĕ сире каллех курăп та, сирĕн чĕрĕрсем савăнса кайĕç", тенийĕ паян каллех чăна килет /Иоан. 16,22-23/.

Сăваплă Апостолсем Чĕрĕлсе Тăнă Христоса чунĕсен куçĕсемпе те, ÿт куçĕсемпе курнă пек эпир курман пулин те, Христосăн вĕренекенĕсем пекех, чунăмăрсем тивлет ырăлăхĕпе çĕкленнине туятпăр.

Турăран хăракан хĕрарăмсем, Унăн Тупăкĕ патне ÿте сĕрсе ырăлатма чи малтан çу йăтса пынăскерсем, Чĕрĕлсе тăнă Христоса курса питĕ хĕпĕртенĕ.

Ăслă вăрă-хурах пек: "Эй, турă, Патшалăхна кĕрсен асна ил мана" – тесе камсем калаççĕ – Мăнкун савăнăçĕ çавсен вичĕçĕр. Вĕсем Мăнкунра Чĕрĕлсе тăнă Турă хăйсене: "Паянах Манпа пĕрле Райра пулатăр", – тесе каланине чунĕсемпе туяççĕ те илтеççĕ. Эпир хамăра Мăнкун праçникне кĕтсе илме хатĕрленĕ, Туррăн Таса Ÿчĕпе юнне ăша илсе Вăл асапланнипе те, Чĕрĕлсе Тăнипе те пĕрлешнĕ пулсан, пире те çак хальлĕнех чăн-чăн савăнăç çупăрласа тăрĕ.

Христос Чĕрĕлсе Тăнийĕ вăл – çыннăн этемлĕхĕ, шуйттана, çылăха тата вилĕме парăнтарса тунă Аслă Çĕнтерĕвĕ. Иисус Христос Туррăмăр вилĕмрен Чĕрĕлсе Тăнă хыççăн çынна Çăлас тĕлĕшĕпе тунă хăватлă ĕç вĕçленнĕ. Сăваплă Павел Апостол каланă: "Адам урлă пурте вилнĕ пек, Христос урлă пурте чĕрĕлсе тăрĕç", – тенĕ.

Эй, Чĕрĕлсе Тăнă Туррăмăрпа пĕрлехи юратнă аттемсем, пиччемсемпе шăллăмсем, аппамсемпе йăмăкăмсем!

Эпир те, хаклă çу йăтса пынă хĕрарăмсем пек, Христос Вилĕмрен Чĕрĕлсе тăни çинчен ырă хыпара пирĕн çывăх çыннăмăрсем патне çитерпĕ Христосăн Апостолĕсем пек пулар. Пире Турă Патшалăхĕн Евангелине Христосăнни евĕр юратупа, чаплăх сăмахĕпе, ырă ĕçсем тунипе, ырă пурăннипе пур енлĕн сарма чĕнсе илнĕ. Христос Чĕрĕлсе тăнин çуттине ĕненÿсĕр пурăнакан çынсен тĕттĕмлĕхĕ хушшине илсе çитерер.

Ăста курайманлăх – çавăнта юрату илсе çитерер. Пирĕн сăмахăмăрсемпе ĕçĕмĕрсем усал чĕресене çемçетчĕр, пĕтерекен çылăхсенчен çынсене çăлччăр, вĕсене пурăнăçăн йывăр вăхăтĕнче пулăшчăр.

Кил-йыша çирĕплетес, çамрăк ăрăва Тÿрĕлĕх Сывлăшĕ вĕрентнĕ пек чăнлăхра тăма, урă та ырă, таса йăла-йĕркепе пурăнма вĕрентес тĕлĕшпе пирĕн уйрăмах хытă тăрăшмалла. Йывăр ларутăрури çынсем патне çитмелле, вĕсене сăмахпа та, ĕçпе те пулăшмалла. Чăн тĕн çыннийĕн чиркÿ картишĕнчен тухмасăрах пурăннипе çырлахмалла мар: унăн хăйĕн чунне тасатассишĕн тăрăшнипе пĕрлех пулăшу, йăпату кирлисемпе юнашар пулмалла; таса йăла-йĕркепе пурăнса ыттисене ырă тĕслĕх кăтартмалла.

Эй, Турра юратакан кĕтĕвĕм, эпĕ каллех, пĕтĕм чĕререн татах саламлатăп та кĕллĕмсем урлă акă мĕн сунатăп: хамăрăн Таса Чиркÿ Тăван çĕршывăмăрăн мухтавĕшĕн кулленех тăрăшса тăрмашса тăван кулленхи ĕçре сире Чĕрĕлсе Тăнă Христос хăйĕн иксĕлми тивлечĕпе ырăлăхне парсах тăтăрччĕ!

Христос Чĕрĕлсе Тăнă Çуттăн шевлийĕ тата Туррăн калама пĕлмелле мар юратăвĕ яланах сирĕнпе пуринпе те пĕрле пултăр! Аминь.

Христос Чĕрĕлнĕ! Чăн-чăнах Чĕрĕлнĕ! Чĕрĕлсе Тăнă Христосăн юратăвĕпе, Туррăн хĕрхенекен кăмăлĕпе –

**ВАРНАВА,
Шупашкар тата Чăваш Митрополичĕ,
Чăваш Митрополийĕн пуçлăхĕ.
Христос Пасхи /Мăнкунĕ/.**
Шупашкар хули, 2015 çул.



**Хаклă ентешсем!**
**Сире Космонавтика кунĕ ячĕпе саламлатăп!**

*Юрий Гагарин çĕр чăмăрĕ çинче пурăнакансенчен пĕрремĕш пулса тĕнче уçлăхне парăнтарнăранпа çур ĕмĕр ытла иртрĕ. Уçлăха тĕпчесе алла илесси пирĕн пĕтĕм планетăшăн питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ку енĕпе Чăваш Ен тивĕçлипе мухтанма пултарать, мĕншĕн тесен тĕнче уçлăхне парăнтарас ĕç историне унăн мухтавлă ывăлĕсен - Андриян Николаевăн, Николай Бударинăн тата Муса Манаровăн – ячĕсем ылтăн саспаллисемпе çырăнса кĕрсе юлнă.*

*Виççĕмĕш космонавт, Совет Союзĕн икĕ хутчен Геройĕ, авиаци генерал-майорĕ Андриян Николаев çуралса ÿснĕ тăрăхра, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл салинче, легендарлă ентешĕмĕре халалласа асăну комплексĕ çĕкленĕ. Тĕнче уçлăхĕпе космонавтсем çинчен ытларах пĕлме, Андриян Григорьевич Николаевăн паттăрла пурнăçĕпе тĕплĕнрех паллашма май паракан çав комплекса килсе çÿрекенсен шучĕ çулсерен ÿсет.*

*Паян республикăри "Элара" АУО, "Чăвашкабель" АУО, "Электроприбор" АУО пек предприятисенче вăй хуракан çĕршер ăсчахпа конструктор, испытательпе производство ĕçченĕ космос отраслĕн аталанăвне хăйĕн тÿпине хывать. Пултарулă çамрăк космонавтсен юхăмĕ сарăлса пырать тата çирĕпленет. Çавăнпа та эпĕ Чăваш Ен çывăх вăхăтрах тĕнчене çĕнĕ Гагаринсемпе Циолковскисене тата Королевсене парнелеме пултарасси пирки иккĕленместĕп!*

*Космос отраслĕнче ĕçлекен мĕнпур çынна çирĕп сывлăх, кăткăс та яваплă ĕçре çитĕнÿсем, телей тата ырлăх сунатăп.*

**Чăваш Республикин**
**Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

# Уçлăх паттăрĕсен уявĕ



Çак эрнере Шуршăлти СССР летчик-космонавтăн А.Г.Николаевăн Мемориал комплексĕнче Николаев вулавĕсене пĕтĕмлетнĕ. Ăна Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине халалланă. Малтанах пĕтĕм республикăран пуçтарăннă шкул ачисене куçса çÿрекен "Космонавтсен пĕрремĕш отрячĕ" куравпа паллаштарнă.

Конференци пуçланиччен "Байконур – Шупашкар" космонавтика ассоциацийĕн президенчĕ, аэрокосмос тытăмне çĕнĕ специалистсемпе тивĕçтермешкĕн патшалăх программине хатĕрлеме хутшăнакан Валериан Тихонов тухса калаçнă. Унăн шухăшĕпе, çамрăк ăрăва ракетăпа космос техникин хăйне евĕрлĕхĕпе паллаштармалла. Çакă хальхи вăхăтри Королева тупма пулăшĕ.

Николаев вулавĕсенче республикăри 16 районти тата хуласенчи вĕренекенсемпе вĕрентекенсем 45 ĕç хÿтĕленĕ. Çамрăк космонавтсен çулсерен лайăхрах хатĕрленнине, хушма ыйтусене туллин хуравланине палăртнă жюри членĕсем.

* * *

Шупашкарти Андриян Николаев космонавт летчик ячĕллĕ пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан 10-мĕш шкулта космонавтика эрни пырать.

Пĕрремĕш хутра А.А.Леонов уçă космоса тухнăранпа – 50 çул тата пĕрремĕш космонавтсен отрядне йĕркеленĕренпе – 55 çул, "Байконур" космодрома туса хунăранпа 60 çул çитнине халалласа пуян стендсем йĕркеленĕ. Пÿлĕмсен алăкĕсем çинче те ака уйăхĕн 12-мĕшĕ çывхарса пыни палăрать. "Космос калейдоскопĕ", "Тĕнче уçлăхĕн ĕмĕрĕ", "Çăлтăрсен патне çул хыватпăр" конкурссене шкулти пур вĕренекен те хутшăнать. 1-11-мĕш класс ачисем валли кăçал "Тĕрлĕ хускануpa сывлăха çирĕплететпĕр" ятпа спорт флешмобне йĕркеленĕ. Кĕçĕн классем вара хăйсене хаваслă спорт вăййисенче кăтартнă. 5-11-мĕш класс вĕренекенĕсем пуçарнипе "Пĕтĕм тĕнче спринчĕ" ятпа чупу иртнĕ. 1-4-мĕш класри шăпăрлансем "Тĕнче уçлăхĕ тата эпир" космос утреннике тата ÿнер музейĕнчи космос балне çитнĕ. Космос историне чи лайăх пĕлекенсем камсем тетĕр-и? Вĕсем те çак шкултах пĕлĕвне анлăлатаççĕ. Ку ятарласа ирттернĕ викторинăран аван курăннă. Аслăрах çултисем вара станцисем тăрăх йĕркеленĕ "Космос çулçÿревĕ" вăййăра хăйсен пуян та анлă тавракурăмĕпе тĕлĕнтернĕ. Юрий Гагаринпа Андриян Николаев пирки çеç мар, паянхи космонавт летчиксем çинчен те лайăх пĕлеççĕ вĕсем.

Вырсарникун çак шкулта пĕлÿ пухакан хастарсем Ю.А.Гагарин тата А.Г.Николаев палăкĕсен умĕнче иртекен митингсене хутшăнĕç. Ака уйăхĕн 13-мĕшĕнче çамрăк космонавтсен отрячĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăлти республика слетне кайĕ.

**Мария РОМАНСКАЯ,**
**Елена АТАМАНОВА.**

## ЫЙТĂМ

## Уçлăха парăнтарнă миçе космонавта ятран пĕлетĕр?

**Вячеслав ИЛЬИН, 49 çулта:**
– Космонавт тесен, паллах, чи малтан хисеплĕ ентешĕмĕре, чăвашăн мухтавлă ывăлне Андриян Николаева аса илетпĕр. Раççей геройĕ Николай Бударин та чăваш. Улатăр районĕнчен тепĕр космонавт тухнăччĕ, шел, халĕ ятне аса илейместĕп. Паллах, тĕнче уçлăхне пĕрремĕш хутчен хăпарнă Юрий Гагарин ятне илтмен çын тĕнчипе мар, çĕр çинче те çук. Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕн Андриян Николаевăн мăшăрне, Совет Союзĕн геройне Валентина Терешковăна та пĕлетпĕр. Гагарин хыççăн вĕçнĕ Юрий Титова та манмастăп. Ыттисене асăнаймастăп. Паян тĕнче уçлăхне хăпаракансен ят-шывне те палăртаймастăп.

**Анастасия НИКИФОРОВА, 11 çулта:**
– Шкулта Юрий Гагаринпа, Юрий Титовпа, Андриян Николаевпа, Валентина Терешковăпа, Светлана Савицкаяпа, Алексей Леоновпа паллаштарнăччĕ. Кашнин пирки тĕплĕ ас тумастăп. Вĕсем çинчен хам тĕллĕн тепĕр хутчен пăхса тухма тăрăшăп. Ыттисемпе те кăсăкланăп.

**Мария ИЛЬИНА, 77 çулта:**
– «Валентина Терешкова качча кайнă чăваша, упăшкинчен хăранипе вĕçсе кайнă космоса» тесе такмаклатчĕç пĕр вăхăтра. Çавăнпах унăн ятне ас тăватăп. Андриян Николаев, паллах, асрах. Урăх калаймастăп та.

**Владимир ЗЫРЯНОВ, журналистика ветеранĕ:**
– Халĕ космонавтсен йышĕ пысăк, çавăнпа пурне асра тытма çук. Нумайăшне, паллах, ятран каласа тухма пултаратăп. Хăй вăхăтĕнче вĕсен пурнăçĕпе кăсăкланнă. Кашнин пирки ытларах пĕлме тăрăшнă.

Пирĕн ăру ача чухне космонавт пулма ĕмĕтленнĕ вĕт. Эпĕ те çав йышран.

Хамăрăн ентешпе Андриян Николаевпа интервью хатĕрленĕччĕ. Акă йăлтах аса килчĕ, куç умне тухрĕ. Унпа çыхăннă хăш-пĕр самант çинчен вулакансене каласа та кăтартман-ха...

Пирĕн тăрăха космонавтсем тăтăш килсе çÿреççĕ. Хисеплĕ хăнасем кампа тĕл пулнине, ăçта кайнине сăнаса пыратпăр.

**Александр ИВАНОВ, 37 çулта:**
– Космоса вĕçни хăнăхнă пулăма çавăрнĕ. Çавăнпах хальхи космонавтсемпе питех интересленместпĕр. Малтанхисене пĕлмесен вара намăс. Гагарин, Титов, Николаев, Попович, Быковский, Терешкова, Комаров, Леонов... Тата калас-и?

Чăваш Республики – виçĕ космонавт çĕрĕ. Андриян Николаева, Муса Манарова, Николай Бударина пирĕн, ентешĕсен, асран кăларма юрамасть.

**Надежда АЛЕКСЕЕВА, вĕрентекен, 38 çулта:**
– Гагарин, Титов, Николаев, Попович... Пĕтĕмпе вунă космонавта пĕлетĕп. Юрий Гагарин пирки эпĕ ача чухнех нумай вуланă. Вăл "Восток" карапппа çĕр тавра пĕр сехет те 48 минут вĕçнĕ. Çулсем иртĕç, ĕмĕрсем хыçа юлĕç, çынсем вăрçă, революци хăçан пуçланнине те манса кайĕç. Анчах та акан 12-мĕшне нихăçан та асран кăлармĕç. Çак кун тĕнче уçлăхне пĕрремĕш хут çын вĕçсе хăпарнă.

**Валентина СЕМЕНОВА, бухгалтер, 43 çулта:**
– Речĕпе калас пулсан, малтанхи тăватăшне асăнма пултаратăп. Чăвашран тухнă Манарова, Бударина пĕлетĕп. Юрий Гагарин тĕнче уçлăхне вĕçсе хăпарнă хыççăн космонавта хисеплесе çемьере ача çуралсан ун ятне пама тытăннă. Мана та анне Терешковăна асăнса Валентина ят çыртарнă. Акан 12-мĕшне асран кăларма çук. Шкулта вĕреннĕ чухне уявлансем халĕ те манăçман. Пирĕн отряд унăн ячĕпе хисепленсе тăратчĕ. Космонавтика кунне халалласа хаçат кăлараттăмăр, арçын ачасем ракетăсем ăсталатчĕç.

# Журналистсем – Каçал çĕрĕнче



Василий КУЗЬМИН сăнÿкерчĕкĕ.

Каçал ен – издательство çуртĕнче ĕçлекен чылай çыншăн çуралнă тăван кĕтес. Директор-тĕп редактор Валерий Туркай та, унăн заместителĕ Геннадий Максимов та çак тăрăхра çуралса ÿснĕ. Журналистсен йышĕнче те Комсомольскинчен тухнисем сахал мар. Чылайăшĕ кĕçнерникун ентешĕсемпе тĕлпулма çула тухрĕ.

"Хыпарпа" тата унăн кăларăмĕсемпе паллаштарнă май редактор хаçат 110 çулхи юбилейне паллă тунă çĕре тăван тăрăхра хаçат тусĕсем чакмасса, пушшех те йышланасса шаннине систерчĕ. Геннадий Аркадьевич та çакăн пиркиех калаçрĕ, ентешсене шаннине пĕлтерчĕ.

Кашни хаçат-журналăн представителĕ вулакан йышĕ ÿсессе кĕтнине систерчĕ. Çĕнĕ технологисем аталанаççĕ пулин те алăпа тытса вулани пархатарлăраххине каларĕ.

Пичет кăларăмĕсен паха енĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕ Михаил Афанасьев та палăртрĕ.

– Хаçатра вуланине, телекуравпа тата радиопа курни-илтнине танлаштарсан, хăть те хăçан та тепĕр хутчен тишкерме пулать, – терĕ Михаил Романович.

Тĕлпулăва пухăннисен кăмăлĕсене хăпартса Клара Осокинăпа Вячеслав Вахтеркин илемлĕ юрăсемпе савăнтарчĕç.

**Татьяна НАУМОВА.**

# "Хыпар" медале тивĕçнĕ



Василий КУЗЬМИН сăнÿкерчĕкĕ.

2014 çулта Сочире иртнĕ Олимп тата Паралимп вăййисен кунçулне чăваш пичет кăларăмĕсенче анлăн çутатнăшăн «Хыпар» Издательство çурчĕн коллективне «XXII Хĕллехи Олимп вăййисем тата XI Хĕллехи Паралимп вăййисем: Сочи, 2014» астăвăм медалĕпе тата РФ Президенчĕ **Владимир Путин** алă пуснă Хисеп хучĕпе чысланă. Сумлă наградăна «Хыпар» Издательство çурчĕн директорне – тĕп редакторне **Валерий Туркая Сергей Мельников** министр ЧР Спорт министерствин анлă ларăвĕнче панă. Çак медалех «Хыпар» хаçатăн хастар авторĕ **Петр Сидоров** та тивĕçнĕ.

**О.ПЕТРОВ.**

**Апрелĕн 18-мĕшĕнче, шăматкун, Шупашкарти Ачасемпе çамрăксен пултарулăх керменĕнче "Кĕтне" ентешлĕхĕн черетлĕ уявĕ пулать. Ăна Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине тата Литература çулталăкне халалланă. Уяв 14 сехетре пуçланать.**

ВИЗИТ

# Çыхăнусем çирĕпленеççĕ

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ака уйăхĕн 8-10-мĕшĕсенче Беларуç Республикинче ĕçлĕ визитпа пулнă. Висĕмкун Михаил Васильевич БР Президенчĕпе Александр Лукашенкопа тĕлпулнă. Тĕлпулура экономикăра килĕштерсе ĕçлессипе, культура çыхăнăвĕсене тĕреклетессипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă.**



Александр Лукашенко Чăваш Енпе пĕрпеклĕх нумаййине палăртнă. «Эпир чăннипех пĕрешкел – çутçанталăкпа, йăла-йĕркепе, халăх промыслисемпе, наци тумĕн эрешĕсемпе. Хăвăра кунта килти пекех туясса шанатăп. Пирĕн халăхсен ĕçченлĕхĕ пĕрлехи кирек мĕнле проекта та пурнăçа кĕртме пулăшĕ», – тенĕ Беларуç Республикин Президенчĕ.

Журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май Михаил Игнатьев юлашки вицĕ çулта Чăваш Енпе Беларуç хушшинчи тавар çаврăнăшĕ 2,5 хут ӳснине çирĕплетнĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Беларуç Республикинче ĕçлĕ çулçӳревре пулнă май акан 9-мĕшĕнче Минскра Çĕнтерӳ монуменчĕ умне чечек кăшăлĕ хунă, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин патшалăх музейне çитсе курнă.

Михаил Васильевич çамрăк ăрăва патриот воспитанийĕ парас ĕçре музей экспозицийĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă.

**Елена АТАМАНОВА.**
ЧР ПА сайтĕнчи сăнӳкерчĕк.

ТĔРĔСЛЕВ

# Чир саралăсран

**Юлашки вăхăтра какайпа сĕт, пыл тата выльăх-чĕрлĕх ытти продукцине апат-çимĕç хăрушсăрлăхне çирĕплетекен документсăр, санкцилемен вырăнсенче сутнă тĕслĕх нумайланнă. Асăннă çимĕçсене çынсем йĕркене пăссах урамра е пĕр-пĕр çурт картишĕнче, пахчаçимĕç сутма уйăрнă вырăнсенче алăранах сутаççĕ.**

Какая, сăмахран, пасарта е лавккара çеç туянмалла. Йĕркепе килĕшӳллĕн ку апата сутакан вырăнта сивĕтмĕш, шыв пулмаллах. Вăл малтан ветеринарипе санитари тĕрĕслевĕ витĕр тухмалла. Сутлăха юрăхли çине пичет çапаççĕ. Тĕрĕссипе, ветеринарипе санитари экспертизин лабораторийĕ çук тăк, кунашкал пасар-лавккара та аш-пăш, пулă тавраш, сĕт-турăх сутма юрамасть.

Асăннă апат-çимĕçе сутмалли нормăна пăснине кура Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн инспекторĕсем ШĔМ ĕçченĕсемпе час-часах рейдсене тухаççĕ. Ыйту çивĕчлĕхне кура республикăри хăрушă чирсем саралассинчен хӳтĕленес енĕпе ĕçлекен чрезвычайлă комисси нумаях пулмасть черетсĕр ларăва пухăннă. Унта пахалăхсăр /ветеринари документсĕм çук пулсан çимĕçсене шăпах вĕсен йышне кĕртеççĕ/ аш-какай çаврăнăшне чарма кирлĕ мерăсем йышăнма палăртнă.

Иккĕленӳллĕ суту-илӳ вырăнĕсене чи малтан Шупашкарта «шырама» пикеннĕ. Малашне тĕрĕслевсем районсенче те пулĕç.

Асăннă рейдсенчен пĕри ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче иртрĕ. Россельхознадзорăн чикĕ хуралĕпе ветеринари тĕрĕслевĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ Надежда Емельяновăпа Шупашкарти Çĕнĕ Кăнтăр районне çитсе килтĕмĕр. Ытти чухне какая нумай хваттерлĕ çурт картишне лартнă машинăран сутнă, эпир пынă чухне кунашкаллисене курмарăмăр. Пулă, сĕт-турăх тавраш сутакан кинемейсем, хăйсем нормăна пăснине пĕлекенскерсем, пире курсанах апат-çимĕçне сумкисене пуçтарчĕç. Чăл-пар! саланнă кинемейсем васкарĕç курăнать. 1,5 литрлă савăта тултарнă сĕт çаплипех ларса юлчĕ. Ăна никам та йышăнмарĕ.

Пахчаçимĕç сутма тунă вырăнта тăракан пĕр кинемей унта пулă сĕнме юраманнине пĕлмен иккен. Малашне ăна килĕнчех хăварма шантарчĕ. Тепĕр вырăна çитсен салă татăкĕ сутакан тĕл пултăмăр, Надежда Анатольевна пĕрреллĕхе асăрхаттарсах çырлахрĕ.

Шупашкарти Кошкино чарăнăвĕнчен инçех мар вырнаçнă суту-илӳ лапамĕнче пĕр çынна вара штрафлама тивнĕ. Хула администрацийĕн постановленийĕпе килĕшӳллĕн унта ялхуçалăх продукцийĕ кăна сутма юрать. Арçын вара хăй сутакан сĕте тĕрĕслеттермен.

Тĕрлĕ чир-чĕр саралăсран хамăрăнах сыхланмалла: нормăна пăсса сутакан сĕт-тăпăрча, аш-пăша, пулла, пыла туянмалла мар.

**Татьяна НАУМОВА.**

КОНКУРС

# Тухтăрсем – сывă пурнăç йĕркишĕн

**Ака уйăхĕн 7-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери сывлăх кунĕ. Кăçалхипе ăна утмăл пиллĕкмĕш хутчен паллă турăмăр. Раççейре харпăр хăй сывлăхне сыхлама чĕнсе каланă май «Сывă пулма вăхăт!» акци йĕркеленĕ. Пирĕн республика та унта хастар хутшăнать.**

Уява халалласа çак кун республикăра тĕрлĕ мероприяти иртрĕ. Вĕсенчен пĕри шурă халатлисене Шупашкарти ачасемпе çамрăксен пултарулăх керменне йыхравларĕ. Кунта сывлăх сыхлавĕн тĕрлĕ учрежденийĕнче ĕçлекенсен пултарулăхĕпе паллашма май пулчĕ. Республикăри чи лайăх агидбригадăсен пуçтарăнса пĕр-пĕрине тупăшрĕç. «Эпир сывă пурнăç йĕркине суйлатпăр» – çапла чĕнсе каларĕ кашни ушкăн.

– Сывлăх – эпир сирĕнпе операци сĕтелĕ умĕнче тăни çеç мар. Вăл пациент пирĕн пата киличчен чылай малтан пуçланать. Çавăнпах эпир те, медицина ĕçченĕсен çарĕ, сывă пурнăç йĕркине пăхăнмаллине хамăрăн тĕслĕхпе çирĕплетсе урама тухатпăр, утатпăр, чупатпăр, спортпа туслашатпăр. Акă паян пач урăх конкурсра тупăшатпăр, – терĕ сывлăх министрĕ Алла Самойлова пухăннисене саламласа.

Пирĕн тухтăрсем эмелпе те ăшă сăмахпа сыватма çеç мар, юрлама-ташлама та ăста. Хăшĕ пултаруллăраххине палăртма та хĕн. Çавăнпах тӳресем нумай тавлашнă-сӳтсе явнă хыççăн çеç виççĕмĕш вырăна Шупашкарти Васкавлă медицина пулăшăвĕн больницине Кӳкеçри ăс-тăн енчен чирлĕрех ачасен интернатĕнче ĕçлекенсене пачĕç. Иккĕмĕш вырăна Хулари стоматологи поликлиникинче тăрăшакан çамрăксем тухрĕç. Çĕнтерӳçĕ ятне Çĕрпӳ районĕнчи тĕп больницăра тăрăшакан коллектив тивĕçрĕ. «Хăвăнтан пуçла» ят панă вĕсем командăна. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнма, спортпа туслашма чи малтанах тухтăрсен те тĕслĕх кăтартмаллине хăйсем çинче чăннипех çирĕплетрĕç Çĕрпӳ тухтăрĕсем.

Çак уяврах республикăри çĕнĕ конкурсăн çĕнтерӳçине те палăртрĕç. 2014 çулти кăтартусемпе «Чи лайăх терапевт/пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕ /çемье тухтăрĕ/ – диспансеризаци йĕркелӳçи» ята Канаш район тĕп больницин Вăтакас Татмăшри уйрăмĕн ĕçченĕ Екатерина Кириллова тивĕçрĕ. Таврари çичĕ ялти 1,5 пине яхăн çынна сиплет вăл.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Малаллах, çӳлеллех...

Татьяна НАУМОВА

**Республикăра спорта аталантарас тĕлĕшпе тĕрлĕ ĕç пурнăçлаççĕ. Юлашки вăхăтра кăна 60 яхăн спорт объектне хута ячĕç, çĕнетрĕç. ФСКсем, катоксем, футбол уйĕсем... тумашкăн федераци, республика тата муниципалитет бюджечĕсенчен 4,7 млрд тенкĕ тăкакланă. Кăçал патшалăх пулăшăвĕпе усă курса Шупашкарта «Олимпийский» стадиона çĕнетесшĕн, Пăр керменĕн строительствине вĕçлесшĕн. Çавăн пекех маунтинбайк центрне туса пĕтерме, биатлон комплексне çĕклеме шантараççĕ. Республикăри спортпа физкультура объекчĕсен йышне çывăх вăхăтрах Çĕнĕ Кăнтăр районĕнчи ФСК пуянлатмалла. Ăна хăпартас ĕçе иртнĕ çулах пуçăннă. Унта бассейна, спортзала, тренажер, фитнес тата бокс залĕсене пĕр харăс 150 яхăн çын çӳреме пултарĕ.**

**ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников каланă тăрăх, паянхи куна республикăри халăхăн 37,2 проценчĕ физкультурăпа тата спортпа туслă. Ку кăтарту Раççейре лайăххисенчен пĕри иккенне асăнма кăмăллă. Хастарсем ытларах Патăрьел, Вăрнар, Йĕпреç, Канаш тата Шупашкар районĕсенче иккен. Ыттисем те вĕсенчен юлмаççĕ.**

**Физкультура объекчĕсене çынсем кăмăлласах çӳрени, вĕсем пушă ларманни те – ĕçлени, тăрăшни сая кайманнине çирĕплетекен кăтарту. Пĕлтĕртенпе уйăхсерен Сывлăх кунне ирттерме тытăнни, ятарлă кунсенче спортзал-бассейна тӳлевсĕр çӳреме пултарни те халăха илĕртетех.**

**2012 çулхи вĕренӳ çулĕ ачасене çĕнĕлĕхпе кĕтсе илни те асăмрах. Физкультура урокĕн виççĕмĕш сехетне кĕртрĕç ун чухне. Вĕренӳ кичем ан ирттĕр, ачасене хавхалантартăр тесе ăна аэробикăпа, ритмикăпа, шывра ишессипе е спорт вăййисемпе улăштарма ирĕк пачĕç. Çавна май «Ташлакан шкул», «Эпĕ ишме пĕлетĕп» проектсем те старта ăнăçлă тухрĕç.**

**Çитĕнекен ăрăва сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарма, физкультурăпа туслаштарма мĕнпур майсем туса пама тăрăшаççĕ. Акă шкул ачисемпех çыхăннă тепĕр çĕнĕлĕх – 2014 çултанпа ялта вырнаçнă вĕренӳ учрежденийĕсенче физкультура тата спорт валли тивĕçлĕ условисем тăвас тĕлĕшпе ятарлă проект пурнăçланма тытăннă. Ку пулăшăва пирĕн республика та тивĕçнĕ. Федераци бюджетĕнчи укçа-тенкĕпе пĕлтĕр 40 спортзалпа урамри 2 площадкăна юсанăччĕ. Кăçал Чăваш Енри тата 27 шкул çакăн пек çăмăллăха тивĕçĕ.**

**Паянхи куна ялта пурăнакан ачасенчен 28,5 проценчĕ шкулти спорт секцийĕсене çӳрет. 23,2 проценчĕ ку тĕллевпе тĕрлĕ спорт шкулĕпе организацине çитет. Ялти шкулсенче вĕренекен 209 ача пĕлтĕр спортăн 1-мĕш разрядне тивĕçме пултарнă. 21 çын – спорт мастерĕн кандитачĕ пулса тăнă. Пĕри спорт мастерĕ ята илнĕ.**

**Çулсеренех республикăра 300-е яхăн спортпа физкультура мероприятийĕ иртет. Спортсменсем те çĕршыв, Европа, тĕнче шайĕнчи ăмăртусене тухсах çӳреççĕ. Чемпионсен йышĕнче чăваш ячĕ те час-часах илтĕнни, паллах, мăнаçлăх кӳретех.**

**Юлашки çулсенче республикăра волейбол, баскетбол, хоккей, футбол вылясси те вăй илет. Акă Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта, Йĕпреçре, Çĕмĕрлере çĕнĕ футбол уйĕсем йĕркелерĕç. Кăçал вĕсен йышне Вăрнарпа Канашрисем пуянлатмалла. Ку тĕллевпе федераци бюджетĕнчен 8,5 млн тенкĕ куçмалла. «ДЮСШ-Чувашия» команда 2014 çулта Раççей кубокĕнче виççĕмĕш вырăн йышăннă.**

**Массăллă спорта аталантарас тĕллевпе çĕнĕрен те çĕнĕ проектсем пурнăça кĕрсе пыраççĕ. Республикăра пысăк шайри тĕрлĕ ăмăрту иртни те Чăваш Ен сумне ӳстерет. 2014 çулхи «Раççей – спорт çĕршывĕ» форум та спорт пурнăçĕнче тарăн йĕр хăварчĕ. Кăçал пысăк тепĕр мероприятие хатĕрленетпĕр: çĕртме уйăхĕн 20-21-мĕшĕсенче Шупашкарти «Олимпийский» стадионта çăмăл атлетикăн Европа чемпионачĕ иртĕ. Вăл ентешĕмĕрсен ячĕсене çӳллĕ шая çĕклессе шанатпăр. Эпир вара вĕсемпе кăштах та пулин танлашас тесе сывă пурнăç йĕркине пăхăнма, «хускану – пурнăç» девиза йышăнма ăнтăлăпăр.**



АТАЛАНУ ҪУЛӖПЕ

# Ӗҫлекене хаклама пӗлмелле



**Елчӗк районӗнчи «Победа» ОООра кӑтартусем кашни ҫул ӳссе пыраҫҫӗ. Хуҫалӑх тилхепине вунӑ ҫул ытла ӗнтӗ Н.Головин тытса пырать. «Чӑваш хӗрарӑмӗ» хаҫатра хамӑр патри чи ӗҫчен те тӑрӑшуллӑ хӗрарӑмсене асӑнас килет. Килте те, ӗҫре те ӗлкӗреҫҫӗ, ҫемьери мӗнпур ыйтӑва татса пыраҫҫӗ, ачисене тивӗҫлӗ воспитани параҫҫӗ. Вӗсен тӳпи чӑннипех те пысӑк. Ман пирки вара пӗр сӑмах та ҫырмалла мар, эпӗ ертӳҫӗ кӑна. Ферма хӗрӗсемпе вара мухтанмалӑх пур, кашниех яваплӑха туйса ӗҫлет», – терӗ Николай Александрович. Предприяти ертӳҫи тӑрӑшуллӑ ҫынна тивӗҫтерекен шайри укҫа-тенкӗ тӳлеме, ытти енӗпе те кирлӗ пек хавхалантарма пӗлет.**

«Эпӗ халиччен никамран та ӗҫ укҫи пирки кӑмӑлсӑрланнине илтмен. 2014 ҫулта та кашни ҫын пӗр уйӑхра вӑтамран 14796 тенкӗ шалу алла илнӗ. Ӗҫ условийӗсем паянхи пурнӑҫ ыйтнине туллин тивӗҫтереҫҫӗ. Лайӑх тупӑш, аван кӑтарту илес тесен чи малтан производствӑра тӑрӑшакана хавхалантарма, унӑн ӗҫ-хӗлне хаклама вӗренмелле», – палӑртрӗ Николай Александрович. Ял хуҫалӑх ҫултаӑкне те 14 миллион та 912 пин тенкӗ тупӑшпа вӗҫленӗ вӗсем. Ҫакӑ районти чи пысӑк кӑтарту шутланать.

Аш-какай, сӗт-ҫу ытларах туса илни тата сутни хальхи вӑхӑтра уйрӑмах тупӑшлӑ пулнине пурте лайӑх ӑнланаҫҫӗ. Иртнӗ ҫул ферма ӗҫченӗсем пурӗ 18532 центнер сӗт суса илнӗ, пахалӑхне кура вӑл пысӑк хака тивӗҫнӗ. Кунашкалли, пӗр ӗнерен 7095 килограмм сӗт илме пултарни, урӑх нихӑш хуҫалӑхра та пулман. Ҫак предприятире тӑрӑшакан Анна Константинова хӑйне ҫирӗплетсе панӑ ӗнесенчен тата ытларах – 7280 килограмм – сӗт суса илнӗ. Ял хуҫалӑх предприятийӗнче кӑҫалхи икӗ уйӑхри тапхӑрта та пӗр ӗнерен 1053 килограмм сӗт сума пултарни ферма коллективӗ мал ӗмӗттӗллевлӗ пулнине ҫирӗплетет. Апла 2015 ҫулхи тупӑш та аван пуласси халех куҫкӗрет.

Анна Константинова, Елена Портнова тата Татьяна Веникова дояркӑсем пысӑк кӑтартусем ӗнене ҫулталӑк тӑршшӗпех тулӑх апат ҫитернинчен тата ҫӗнӗ технологисемпе усӑ курса ӗҫе тухӑҫлӑ йӗркеленинчен килнине палӑртаҫҫӗ. Ӗнесене хӗлӗн-ҫӑвӗн виҫӗ хутчен суни те сӑвӑма ӳстерме пулӑшать.

Ҫитӗнӳпе ӑнӑҫлӑх, паллах, фермӑра тӑрӑшакансенчен те нумай килет – кашнин ӗҫӗ пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑннӑ. Вылӑх-чӗрлӗх пӑхаканӑн яваплӑхӗ чӑннипех те пысӑк. Акӑ Елена Челяковӑпа Валентина Показаньева ӗнесене пӑрулама хатӗрлеҫҫӗ, пӑрусене йышӑнаҫҫӗ. Кунта тимлӗх кирлӗ. Вылӑхӑн кашни утӑмне тӗрӗслесех тӑмалла. Вунӑ кунран иртнӗ пӑрусене пӑхакан Татьяна Платоновӑн та яваплӑхӗ пысӑк. Пӗчӗккисене лайӑх пӑхмалла, ветеринарипе санитари йӗркисене ҫирӗп пӑхӑнмалла. Пӑрусене 2 уйӑхран пуҫласа 4 уйӑха ҫитиччен ҫитӗнтерекен Раиса Дмитриевӑн та тӳпи пысӑк. Ҫак вӑхӑтра ҫамрӑк пӑрусем шӑпах симӗс утӑ ҫиме хӑнӑхаҫҫӗ. Вӗсене пахалӑхлӑ ҫемҫе утӑ кӑна ҫитерме юранине те шута илмелле. Ял хуҫалӑх предприятийӗнче ятарласа ҫамрӑк пӑрусем валли кашни ҫул кирлӗ таран пахалӑхлӑ симӗс утӑ хатӗрлесе хӑварассине те малти вырӑна хураҫҫӗ.

Зинаида Свекловӑпа Валентина Никитина тына пӑрусене пӗтӗлентернӗ ҫӗрте тӑрӑшаҫҫӗ. Елена Сергеева, Светлана Чермакова, Галина Глинина, Любовь Жирнова, Валентина Кудрявцева фермӑри ытти тӗрлӗ ӗҫе пурнӑҫлама хутшӑнаҫҫӗ. Надежда Цыгановӑпа Елена Пчелова – кладовщицӑсем. Светлана Алексеева медсестра кашни кунах рейса каякан водительсемпе механизаторсен сывлӑхне тӗрӗслет. Марина Портнова сӑвакан зала тирпейлет. Нумай ҫул тӑван хуҫалӑх ферминче ӗҫленӗ Таисия Баранова администраци ҫуртӗнче тирпейлӳҫӗре тӑрӑшать. Хуҫалӑх ертӳҫи Вера Чернова оператор пирки те ӑшӑ та ырӑ сӑмах каларӗ. Вӑл халӗ декретлӑ отпускра.

Ку предприятири ӗҫ условийӗсемпе ниепле те кӑмӑлсӑр пулма ҫук. Фермӑсене темиҫе ҫул каяллах тӗнче шайӗнчи стандартсемпе килӗшӳллӗн юсаса ҫӗнетнӗ, ӗнесене ятарлӑ залра сӑваҫҫӗ. Ҫуллахи лагерьте те ӗҫ условийӗсем чылай лайӑхланнӑ. Ҫӑвӑнпах фермӑра тӑрӑшакан ҫамрӑк та нумай. Аякка тухса каймасӑр тӑван ялтах ӗҫ тупма пултарнишӗн хӑйсем те питӗ кӑмӑллӑ.

Маргарита Курицына ҫамрӑксемшӗн ырӑ тӗслӗх пулса тӑрать. Вӑл фермӑра нумай ҫул ӗҫлесе пысӑк ӑсталӑх пухнӑ. Ӑна ӗне тума хатӗрлекен ушкӑнри тына пӑрусене тата самӑртакан уйрӑма куҫарма хатӗрлекен вӑкӑрсене ҫирӗплетсе панӑ. Сӗт нумай антарччӑр, лайӑх ӗнесем пулччӑр тата вӑкӑрсем самӑр ҫитӗнччӗр тесе пӗтӗм чунне парса тӑрӑшать. Галина Трофимова тӗп зоотехник кашни кунах Кушкӑ ялӗнчен ӗҫе ҫӳрет. Сӑмах май, асӑннӑ ялти 7 ҫын ӗҫ вырӑнӗ тупнӑ кунта.

Бухгалтерире чи нумай ҫул ӗҫлекеннисем – Валентина Селиванова тата Юлия Смирнова. Вӗсен ӗҫ стажӗ 37 ҫул ытла. Вӗсем те ӑшӑ та ырӑ сӑмаха тивӗҫлӗ. Людмила Маркова та нумай ҫул бухгалтерта тӑрӑшать. Людмила Чернова – тӗп бухгалтер. Вӑл ҫамрӑк пулин те хӑйӗн ӗҫне яланах тӗплӗ пурнӑҫлать.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сӑнӳкерчӗкӗ.

ЫРӐ ТӖСЛӖХ

# Вӗлделлӗ пахчан – хӑйӗн илемӗ

**Муркашра пиллӗкмӗш ҫул ӗнтӗ «Ҫын сывлӑхӗ – вӗлле хурчӗ ҫунаттисем ҫинче» ятпа пыл уявӗ ирттереҫҫӗ. Сӑпасра, ҫурлан 14-мӗшӗнче, сиплӗ ҫӗнӗ пыла тутанма, хӗл валли туянма таҫтан та пуҫтарӑнаҫҫӗ.**

Шомик ялӗнче пурӑнакан Ямангеевсем иртнӗ ҫул «Муркаш районӗнчи чи лайӑх пыл – 2014» хурт-хӑмӑрҫӑсен конкурсӗнче виҫҫӗмӗш вырӑна тивӗҫнӗ. Тӗрӗссипе, ҫӗнӗ пыл тутантарас, ыттисен ӑсталӑхӗпе паллашас тӗллевпе ҫеҫ хутшӑннӑ-ха вӗсем уява. «Ҫесмерте пурӑнакан Александр Козлов хурт-хӑмӑрҫӑпа туслӑ эпир, пире вӑл темиҫе ҫул каяллах пӗр вӗлле парнеленӗччӗ, ҫав йыша ӗрчетсе ятӑмӑр. Малтан хӑй килсе пулӑшкаларӗ, пӗчӗккӗн хамӑр та хӑнӑхрӑмӑр. Хурт-хӑмӑр тытни ӗмӗре вӑрӑмлатать, чирчӗртен сыхлать теҫҫӗ. Тен, тӗрӗсех. Ку ӗҫ пире киленӳ кӑна кӳрет. Вӗлделлӗ пахчан хӑйӗн илемӗ», – каласа кӑтартать Зинаида Леонидовна.

Ялта вылӑх усракан сахаллансах пырать паян. Ӗне тытакан та, сысна ӗрчетекен те йышлах мар. Пӗрисене вылӑх апачӗн хакӗ ӳссе пыни пӑшӑрхантарать, теприсем утӑ-улӑм хатӗрлессинчен шикленеҫҫӗ. Виҫҫӗмӗшсене ӳркев пусать ахӑртнех.

Ямангеевсем ӗҫе юратни вӗсем вунӑ гектара яхӑн ҫӗре пушӑ вырттарманнинченех палӑрать. Иртнӗ ҫул 1,5 гектар ҫӗрулми, 3 гектар хуратул лартнӑ. Утӑ та сахал мар туса илнӗ. Килти вылӑх валли те, сутмалӑх та. «Пӗрре хӑнӑхнӑ та – нимӗн йывӑрри те ҫук. Хуҫалӑхри ӗҫе техника ҫӑмӑллатать. Ӗлӗкхи пек алӑпа ӗҫлеместпӗр. Ял халӑхӗ ҫава, кӗреҫе тӗлне манса пырать. Килӗренех мотоблок халь. Уйри ҫӗрсене вара пушӑ вырттарма шел. Ялта пурӑнакан вӑйпиттисемпе ҫамрӑксен пӗр ӗне те пулин усрамаллах, унсӑрӑн намӑс. Чӑваш халӑхӗ ку вылӑха ӗлӗкрен тытнӑ, сӗтел ҫинче яланах сӗт-ҫу пулнӑ», – чунне усаҫҫӗ Ямангеевсем.

Халӗ вӗсен картишӗнче виҫӗ ӗне, пӑрусем те пур. «Сӗт ялта хаклах мар, ҫавӑнпа пуҫтарма килсен те памастпӑр, кашни кунах тӑпӑрчӑ хатӗрлетпӗр, Шупашкара кайса сутатпӑр. Хула халӑхӗ ял апат-ҫимӗҫне питӗ кӑмӑллать», – терӗ Зина аппа. Ӳркенменскер Шупашкарти пӗр больницӑра тӑрӑшать, ҫав вӑхӑтрах вылӑх пӑхма та, ҫуртра хӑтлӑх кӗртме те ӗлкӗрет. «Ялта сӗчӗ-ҫӑвӗ, ашӗ, ҫӑмарти хамӑрӑн. Пылран таҫӑлман. Ҫулла йӑран тулли темӗн тӗрлӗ ҫимӗҫ, сад тулли улма-ҫырла. Ҫулла сӗвӑрса выртмасан лавккана каймасӑрах пурӑнма пулать. Ял халӑхӗнчен пуянраххи те ҫук халь», – сӑмаха малалла тӑсать кил хуҫи арӑмӗ.

Картиш тулли чӑх-чӗп, бройлерсемпе инди кӑвакалӗсем усраҫҫӗ Виталий Геннадьевичпа Зинаида Леонидовна. «Вӗсене пӗчӗк чухне пӑхма ҫӑмӑлах мар. Шултра вылӑха усрама ансатрах пек те туйӑнать мана. Виҫӗ ӗне сӑвасси, кӗтӳ кӗтесси те темех мар. Шӑрӑх та, сивӗ ҫумӑр та хӑратмасть пире. Чӑх-чӗп, хуркӑвакал вара картишне илемлетет, ҫавӑншӑнах усрас килет. Инди кӑвакалӗсене хытӑ кӑшкӑрманшӑн юрататпӑр, ахальлисенчен вара кунӗпе пӗр канӑҫ ҫук», – йӑл кулать ӑшӑ кӑмӑллӑ Зина аппа.



Патӑрьелӗнче е Елчӗкре, Элӗкре е Етӗрнере пулатӑп-и – пирӗн чӑваш халӑхӗ чӑннипех те тӗлӗнмелле ӗҫчен те тӑрӑшуллӑ пулни яр уҫҫӑн палӑрать. Муркашра та ҫаплах. Пӗр кунрах темиҫе яла ҫитсе курмалла пулчӗ. Пӗри тепринчен хитререх те пуянрах, тулӑх пурӑнма тӑрӑшнишӗн, малтан мала ӑнтӑлнишӗн чун савӑнать. Ҫӗр ӗҫне чунтан парӑннӑ Ямангеевсем патӗнчен те хӑпартланса тухрӑм.

**Елена ГЛУХОВА.**
Автор сӑнӳкерчӗкӗ.

**ХАКЛӐ ВУЛАКАНСЕМ!**

**"Хыпар" Издательство ҫурчӗн кӑларӑмӗсене 2015 ҫулӑн II ҫуррине илсе тӑмашкӑн апрелӗн 1-мӗшӗнчен ҫӗнӗ хаксемпе ҫырӑнтараҫҫӗ. Почта уйрӑмӗсенче "Хыпар" – 798,06 тенкӗ, "Хыпар-эрнекун" – 345,54 тенкӗ, "Чӑваш хӗрарӑмӗ" – 360,66 тенкӗ. "Чӑваш пичечӗ" тата "Советская Чувашия" киоскӗсенче "Хыпар" – 288 тенкӗ, "Хыпар-эрнекун" – 150 тенкӗ, "Чӑваш хӗрарӑмӗ" – 222 тенкӗ. Редакцире "Хыпар" – 144 тенкӗ, "Хыпар-эрнекун" – 90 тенкӗ, "Чӑваш хӗрарӑмӗ" – 141 тенкӗ. Хаксем кӑштах ӳснӗ. Ҫапах эсир хӑвӑра килӗшекен хаҫатсене ҫырӑнса илессе, пирӗнпе ҫыхӑнӑва татмасса шанатпӑр.**

**Ыра хыпар кунĕнче Тихвин Православи Турă амăшĕн хĕрарăмсен мăнастирне халăх çав тери нумай килнĕ. Чиркӳре малалла иртме те çук, çынсем алăк патĕнчех тăраççĕ. Шупашкарта тĕпленнисем, тĕслĕхрен, 6,5 сехетрех çула тухнă, кĕлĕ пуçланиччен Çĕрпĕве çитнĕ. Вăрмар тăрăхĕнчен килнĕ пĕр хĕрарăмпа паллашма май килчĕ. Ака уйăхĕн пуçламăшĕнче ашшĕ çĕре кĕнĕ унăн. Хĕрĕх кун çитиччен ун ячĕпе кĕлĕ вулаттарасшăн хĕрĕ. "Хуйха пула пуç çаврăнсах кайнă тейĕн, чĕррисемшĕн çурта лартма мансах кайнă", – хăйне ӳпкелесе те илчĕ вăл. Унччен те пулмарĕ, турăш лавккине тепĕр хут кайса килчĕ.**

**Пĕчĕк ачасем амăшĕсемпе пĕрле урама тухкаласа кĕчĕç. Кĕлĕ вăхăтĕнче хăнăхнă йăлапа хăйсене лăпкă тытрĕç вĕсем: кутăнлашса, макăрса кăтартмарĕç. Сăмах май, хăшĕ-пĕри ача кӳмипех килнĕ.**

# Сивĕ сăмах калас вырăнне кĕлĕ вуламалла



## Типĕ апачĕ

Чиркӳри кĕлĕ хыççăн Турăпа калаçма килнисенчен чылайăшĕ пачăшкăсемпе, манашкăсемпе пĕрле вăрăм сĕтел хушшине апата вырнаçса ларчĕ. Винегрет, тăварланă купăста, хăяр тӳрех куç тĕлне пулчĕ. Унтан вĕри яшка, çĕрулми нимĕрĕ, темĕн тĕрлĕ пăтă, компот лартса пачĕç. Амăшĕсем хăйсем çиме пуçличчен тĕпренчĕкĕсене кашăкпа апат хыптарчĕç. Пĕчĕкскерсен хырăмĕ хытах выçнă пулмалла.

"Турилккене хунине йăлт çимелле", – вĕрентет манпа юнашар апатланакан ватă хĕрарăм. Чăнах, апат хăварсан пĕçерекенсен ĕçне хисеплемен пекех пулса тухать. Ку йĕркене пурте пĕлни куçкĕрет, ахальтен мар кашнин умĕнчи савăт-сапа хăвăртах пушанчĕ.

"Ытти чух Ыра хыпар кунĕнче пулă çиекенччĕ. Анчах кăçал Мăнкунччен эрнере килчĕ çак уяв. Çавăнпа унпа апат хатĕрлемен", – терĕ картишне тухсан Нина матăшкă.

Калаçса тăнă вăхăтрах çынсем пил ыйтма чарăнчĕç. Канаш районĕнчи Çĕнĕ Чăлкассинчи Валентина ятлă хĕрарăм Çĕрпĕве яланхи пекех пушă алăпа килмен. Мăнкун сĕтелĕ хатĕрлемешкĕн хĕрĕн çемйи валли çăмарта, тăпăрч илсе килнĕ. "Мана матăшкă юрататă", – кулса та илет вăл.

## Хĕрес çӳрев

Мăнастирти манашкăсен каччă тухма та, ача çуратма та юраманни паллă. Вĕсем чуншăн тата чиркӳшĕн ĕçлесе пурăнаççĕ. Акă Нина матăшкăн водителĕ Магдалина курăнчĕ. "Унăн ашшĕ-амăшĕ – чăваш. Хĕрĕ вырăсла калаçатчĕ. Хамах тăван чĕлхепе хутшăнма вĕрентрĕм ăна", – ăнлантарать кунти ĕç-пуçа йĕркелесе пыракан хĕрарăм. Çакăншăн вăл тата пысăкрах хисепе тивĕçлĕ. Сăмах май, Нина матăшкă Иерусалимра 7 çул пурăннине асăнса хăварас килет.

Кунта кашни кун 12 сехетре хĕрес çӳревĕ йĕркелесси йăлара. Хăш чухне 50-60 çын таран пуçтарăнать-мĕн. Хальхинче, те çанталăк сивĕрен, те çил витĕр каснăран, халăх саланса пĕтрĕ. Эпир виççĕн Иустинья инекиня хыççăн Ыра хыпар кунĕнчи кĕлле вуласа утрăмăр. Ăна сасăпа та, ăшра та калама юрать. Кĕлле 150-шар хут вуласан тин мăнастир картишне кĕтĕмĕр.

"Пĕр хĕрарăм хĕрес çӳреве хутшăнас тенĕ çĕртех хăйне япăх туйнăран сак çине ларса юлнă. Çав вăхăтрах тĕлĕрсе кайнă вăл. Ыйхă тĕлĕшпе кĕлĕ калакансен хыççăн ылтăн йĕр юлнине курнă хăйхиcкер. Хăвăртрах тăрса çав çынсене хăваласа çитнĕ..." – пĕр тĕслĕхпе паллаштарать малта пыракан инекиня. Хĕрес çӳревре пулăшу ыйтни тӳпене çитни пирки иккĕленмест тĕне ĕненекен.

## Ялти пекех

Пысăк библиотека çумĕпе иртсе пыратпăр. Унта тĕн кĕнекисем упранаççĕ. Ку çурт кĕçнерникун тата вырсарникун вулакансене хапăл.

"Ялти ытти çынсем пекех пурăнатпăр эпир. Хамăра тăранса пурăнмалăх çĕр те, выльăх-чĕрлĕх те пур", – каласа кăтартать Иустинья инекиня. Уçăлма кăларнă ĕнесене, сурăхсене, чăх-чĕпе хăваласа кĕртнĕччĕ ĕнтĕ. Манашкăсем картише шăлса тасататчĕç. Кама мĕнле ĕç хушнă, çавна тумалла – мăнастирте урăхла юрамасть.

Манашкăсем пахчаçимĕç, чечек калчи лартса тултарнă. Улма-çырла йывăççисем те кĕçех çулçă кăларĕç, çеçкене ларĕç. Пĕчĕк кӳлĕре пулă вылямa пуçлĕ. Ку вырăна ачасем уйрăмах юратаççĕ-мĕн.

Аслă пĕлӳллĕ специалистсем те мăнастирте канлĕх тупни вăрттăнлăх мар. Ял хуçалăх, медицина, педагогика ĕçне пĕлекенсемпе кулленхи пурнăçа майлаштарса-йĕркелесе пыма çăмăлрах.

## Мăнкун çăмарти

Мăнастирти вырсарни шкулне кĕрсенех çĕвĕ машинипе ĕçлени илтĕнчĕ. Ятарласа Мăнкунра сцена çине кăларакан спектакль сăнарĕ – Кит – хатĕрпе пĕрех. Ăна унтан-кунтан çĕлесе çыпăçтармалли кăна юлнă. Вăл, Турă хушнипе пурăнман Иона пророка çăтаканскер, тĕнче пысăкăш туйăнчĕ. Ыттисен çипуçне вара хатĕрлесе çитернĕ.

"Эпир шоу кăтартма мар, тарăн шухăшлă программа хатĕрлеме тĕллев тытнă. Ку спектакль кĕлĕ вуласа çылăхран тасалма вĕрентет", – пуçларĕ калаçăва Надежда Николаевна. Çак ĕçпе Çĕрпӳри, Куславккари, Улатăрти хĕрарăмсен колонийĕсене çитесшĕн вĕсем. Ваттисемпе сусăрсен çуртне те, социаллă центрсене те çул хывнă çак йыш. "Пирĕн пата камсем килсе çӳреймеççĕ, эпир хамăр вĕсем патне каятпăр", – тет хĕрарăм.

Мăнкунра вырсарни шкулĕн артисчĕсене Красноармейски районĕнчи Упири ятарлă шкулта кĕтеççĕ. "Вĕсем никам та мар, шăпах тантăшĕсем калаçнине малалла ӳпĕнсе пĕр сăмах сиктерми итлеççĕ. Спектакльти сăнарсен хăйнеевĕрлĕхĕ вĕсен чунне кĕрсе юлать", – çирĕплетет вĕрентекен.

Унтан кулич касса хурĕç, пĕрле çăмарта çийĕç, чей ĕçĕç, тĕн кĕнекисем парса хăварĕç. Турра ĕненекенсемпе хутшăнни çамрăксен чĕринче ыра йĕр хăваратех.

Вырсарни шкулĕнче уяв тĕлне çăмарта куравĕ йĕркеленĕ. Ӳкернĕ, вĕтĕ шăрçапа илемлетнĕ ал ĕçĕсем ытла та хитре.

Кăçал Мăнкунра чиркӳре капăрлатнă карçинкка çакасшăн. Унта пĕри çăмарта хурса хăварма, тепри ăна илсе çиме пултарĕ.

## Йĕри-тавра – пирĕшти

Чăнах та çапла. Вырсарни шкулĕнчи мачча, стена çинче, чӳрече анинче курма пулать вĕсене. "Пĕрре çапла ачасем экскурсие килнĕччĕ. Лара-тăра пĕлменни чӳрече патне чупса пычĕ те вĕтĕ шăрçаран тунă пирĕштие ярса тытрĕ. Унтан ăна кăкăр çумне пăчăртарĕ. "Ку – манăн пирĕшти", – аларĕ çийĕнчех. "Юрать, ил ăна. Çак пирĕшти сана пулăшса пытăр", – терĕм. Темшĕн яланах çак тĕслĕх аса килет", – пытармасть хĕрарăм.

"Мĕнпе пулăшмалла?" – çапла ыйтнине тăтăш илтме тӳр килнĕ-и? Анчах хăйсен пурлăхне, укçитенкине ыттисемпе пайлама хатĕр çынсем те сахал мар пирĕн йышра. "Ун чухне гитара калама вĕренеттĕмĕр. Инструментсем çитмеççĕ. "Мĕн кирлĕ сире?" – мăнастир картишĕнче пĕр арçын сăмах пуçарни маншăн та кĕтменлĕх пулчĕ. Гитара хакĕ пирки калаçса кайрăмăр. Вăл çав самантрах кĕсйинчен 5 пин тенкĕ кăларса тыттарчĕ. Паянхи кунччченех ăна тав туса пурăнатăп", – Надежда Николаевнăпа калаçса тăранма çук.

## Турăран...

Çынна пулăшни киленĕç кӳнине вырсарни шкулне çӳрекенсем хăйсем те лайăх пĕлеççĕ. Акă, тĕслĕхрен, нумаях пулмасть вĕсем пĕр кинемей патне кĕрсе тухнă. Килте сивĕтмĕш пулманран кастрюльти апата юр çине лартса упранă ватă хĕрарăм. Çанталăк ăшăтсан унăн пур-çук апат-çимĕçĕ пăсăлма пуçласси пăшăрхантарнă вĕсене. Ыра чунлă çынсем ăна сивĕтмĕш илсе пама шухăш тытнă. Кĕçех кирлĕ хатĕре Шупашкартан турттарса та килнĕ. Хайхи çав хĕрарăм курман вăхăтра ăна картишне кĕртсе лартнă. "Турăран", – çырса хăварнă кĕске çыру. Кайран сивĕтмĕше хăйсемех вырнаçтарса панă. Кинемей камсем пулăшнине тавçăрать пуль-ха та, çапах асамлăха та ĕненет вăл.

Пĕччен арçынсен кил-çуртне тирпейлеме те хутшăнать, çити-çитми пурăнакансене япаласемпе тивĕçтерме те тăрăшать çак йыш.



## Кĕнеке витĕмĕ

"Паян Турă кĕнекисене вулатпăр-и?" – вырсарни шкулне çӳрекен ачасем çапла калани, паллах, савăнтарать Надежда Николаевнăна. "Çамрăксем – пысăк вăй. Вĕсем хăйсем те çакăн çинчен пĕлмеççĕ. Çак вăй йăлтах аркатма та, çĕнĕрен çĕклеме те пултарать. Çамрăксене тĕрĕс çул суйлама вĕрентмелле", – çирĕплетсе калать вăл.

Аслă классем валли хатĕрленĕ тĕн литературипе паллашма май килчĕ. Унта пурнăçри кăткăс лару-тăрăва сирме вĕрентнĕ.

...Пĕр хĕр чăкăртăш, сăлтавсăрах вĕчĕрхенекен каччăпа пĕрлешнĕ. Унăн тантăшĕсем лăпкă яшсене суйласа илнĕ, анчах пурпĕр килте хирĕçмелли тупăнсах тăнă. "Эсир атлаçнине илтмен. Арçыннăн кăмăлне мĕнле майпа тупатăн?" – кăсăкланнă çамрăк арăмсем хăнана пырсан. "Эсир пĕр-пĕрне сивĕ сăмахсемпе кӳрентеретĕр. Эпĕ, упăшка вĕчĕрхенме пуçланине сиссен, шăл шурри те кăтартмастăп, чунĕ лăпланиччен тесе кĕлĕ вулама пуçлатăп", – вăрттăнлăха уçнă хĕрарăм.

Çамрăк тепĕр арăм тарăхнă та япалисене чăматана чикнĕ, амăшĕ патне кайма пуçтарăннă. Паллах, иккĕшĕн те кăмăлĕ хуçăлнă. Тĕрĕссипе, хĕрарăмăн ниçта та каяс килмен.

– Мĕншĕн чармастăн эсĕ мана? – упăшкин кусĕнчен пăхнă вăл.

– Эсĕ – ирĕклĕ. Ăçта лайăх сана – çавăнта пурăн, – хуравланă арçын.

Чуна усни те йăнăш утăм тăвасран сыхлать, ытлă-çитлĕ тата пĕр çăвартан пурăнма пулăшать.

## Çĕнĕ чиркӳ

Çĕрпӳри Тихвин Православи Турă амăшĕн мăнастирĕн историйĕ 1670 çултанпа çырăнать. Малтанах унта манахсем пурăннă. 1871 çултанпа мăнастирĕн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнине палăртса хăвармалла. Ун чухне арçынсен мар, хĕрарăмсен килĕ пулса тăнă вăл.

Революци хыççăнхи çарату, аркату тапхăрне чăтса ирттернĕ Турă çурчĕ. Шыв та шар кăтартнă ăна. Пурпĕрех çынсем такăрлатнă сукмак çухалман. Паян çакăнта хĕрĕхе яхăн хĕрарăм кĕлĕ туса пурăнать.

Мăнастирти чиркӳ пысăках мар, уявсенче уйрăмах тĕне ĕненекен пур çын шала кĕрсе тăраймасть. Çавăнпах кĕлĕ вăхăтĕнче нумайăшĕн урамра тăма тивет. Çакна шута илсе 2004 çулта федераци укçипе çĕнĕ чиркӳ хăпартма пуçланă. Ăна çулла хута ярасшăн. Анчах шалти ĕçсене вĕçлеймен-ха. Пирĕнтен кашниех сăвапла çак ĕçе хăйĕн тӳпине хывма пултарать. Май пур чухлĕ укça куçарса памашкăн банк реквизичĕсене пичетлетпĕр:

Цивильское ОСБ 4437 г.Цивильск
ИНН 2115004020 КПП 211501001
Р/с 40703810175180000028
Волго-Вятский банк СБ РФ
Чувашское ОСБ № 8613 г. Чебоксары
к/с 30101810300000000609, БИК 049706609
Тихвинский Богородский Православный женский монастырь.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕсем.



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

## Мăнкун



**650 грамм тăпăрч, 250 грамм сахăр çăнăхĕ, 200 грамм хăйма, 250 грамм услам çу, 80-шар грамм исĕм, курага, хура слива кирлĕ.**

Тăпăрча ала витĕр 2 хут кăлармалла. Ăна услам çупа пăтратмалла. Курагана, исĕме, хура сливăна 15-20 минутлăха вĕри шыва ярса лартмалла. Курагапа хура сливăна вĕтетмелле. Тăпăрча шӳтернĕ улмаçырлапа, хăймапа, ванилинпа, сахăр çăнăхĕпе хутăштармалла. Çак хутăша ятарлă формăна е тĕпне шăтарнă пластмасс пĕчĕк витрене тултармалла. Ăна йывăр япалапа пусăрăнтармалла. Тăпăрч шывне турилккене пуçтармалла. Мăнкуна 10-15 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.



## Кулич

**2,5 стакан сĕт, 1,5 стакан сахăр, 200 грамм услам çу, 1,5 килограмм çăнăх, 4 çăмарта сарри, 2 çăмарта шурри, ванилин, 11 грамм типĕ çĕпре, 300 грамм исĕм кирлĕ.**

**Çиеле сĕрме 2 çăмарта шурри, 100 грамм сахăр, темиçе тумлам лимон сĕткенĕ хатĕрлемелле.**

3,5 стакан çăнăха 2 апат кашăкĕ сахăрпа, çĕпрепе, сĕтпе пăтратмалла. Чустана çур сехетлĕхе ăша вырăна лартмалла. Çăмарта саррине – сахăрпа, ванилинпа, шуррине – тăварпа пăтратса кăпăклантармалла. Чустана çăмарта сарри, ирĕлтернĕ услам çу, çăмарта шурри, çăнăх хушмалла, лайăх пăтратса ăшă вырăнта сехет ытларах тытмалла.

Чустана тип çу сĕрнĕ сĕтел çине кăларса хумалла. Шӳтернĕ исĕм сапмалла. Çаврашкасем туса тепĕр хут хăпартмалла. Чустана ятарлă формăсене тултарса духовкăра пĕçермелле.

Çăмарта шуррине сахăрпа, лимон сĕткенĕпе пăтратса кăпăклантармалла. Вăл пиçнĕ кулича çиелтен сĕрме кирлĕ.

## Хăймапа, шăккалатпа

**500 грамм хăйма, 100 грамм сахăр, 20 грамм желатин, 50 грамм шăккалат кирлĕ.**

Желатина шывра шӳтермелле. Хăймана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла. Желатина вăйсăр çулăм çинче ăшăтмалла, хăйма, ирĕлтернĕ шăккалат хушмалла. Çак хутăша кекс формине тултармалла. Ăна 3-4 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

## Чăхпа, çăмартапа

**Чăхăн кăкăр тĕлĕнчи пайĕ, пĕçернĕ 3 çăмарта, маринадланă 1 хăяр, 10 хура слива, майонез кирлĕ.**

Пĕçернĕ чăх какайне тăватkалласа турамалла. Хăяра, çăмартана теркăламалла. Шӳтернĕ хура сливăна пĕрчĕлесе касмалла. Салата сийлесе /чăх – хăяр – хура слива – çăмарта/ хăпартмалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле.

## Купăстапа, чĕлхепе

**300 грамм купăста, 2 çăмарта, 10 грамм симĕс сухан, 400 грамм чĕлхе, тăварланă 100 грамм хăяр, 50 грамм олива çăвĕ, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Çăмартана, чĕлхене пĕçермелле. Купăстана, симĕс сухана вĕттĕн турамалла. Хăярпа чĕлхене пĕрчĕлесе касмалла. Салатри çимĕçсене олива çăвĕпе пăтратмалла, тăварпа пăрăç хушмалла.

## Кăлпассипе, кăмпапа

**300 грамм купăста, 50 грамм симĕс сухан, тĕтĕмленĕ 250 грамм кăлпасси, 1 кишĕр, 30 грамм тип çу, маринадланă 15 шампиньон, 30 грамм майонез, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă купăстана алăпа çемçетмелле, тăварпа пăрăç сапмалла. Теркăланă кишĕре тип çупа ăшаламалла. Кăлпассие – пĕрчĕлесе, симĕс сухана – вĕттĕн, кăмпана шултран касмалла. Салатри çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

СЫВЛĂХ

# Сĕлĕ кĕрпи



Сĕлĕ кĕрпинчен хатĕрленĕ апат тутлăхлă та сиплĕ. Вĕретнĕ шывĕ те усăллă. Уйрăмах хырăмлăхпа пыршăлăх, геморрой чирĕсемпе аптракан ватăсемшĕн паха.

8-10 грамм кĕрпене пĕçермелле. Кĕрпе вĕретнĕ шыв та организмри япаласен ылмашăвне лайăхлатать, шăл çине хытса ларнă тăвара тасатать, уран пуç пӳрнине мăкăль тухнине ирттерет. Унра магни нумай /шăпах организмра магни çитменнипе кальци тăвар пулса сыпăсем çинче пухăнать/.

Сĕлĕ кĕрпинчен хатĕрленĕ шĕвек чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсенчен сыхлать, нерв тытăмне çирĕплетет.

Сĕлĕ шывне çапла хатĕрлеççĕ: 50 грамм вĕтетнĕ кĕрпене 0,5 литр шыва пĕр талăклăха ярса лартмалла, сăрăхтармалла. Кунне икĕ хут 0,5-1 стакан ĕçмелле.

# Ӳслĕкрен

- Купăста çулçине вĕри шывра тытмалла та пылпа тăвар /1:1/ сĕрсе кăкăр е çурăм çине хумалла. Анчах чĕре патĕнче ан пултăр вăл. Полиэтилен çатăркапа çыхса витĕнсе выртмалла. Вăхăт иртсен çулçа салтма юрать.
- Шывра е кăмакара пĕçернĕ груша та паха. Типĕтнĕ çимĕç компочĕ пысăк температурăна пула çăвар типнине ирттерет. 1 стакан типĕ çимĕçе çур литр шыва ярса 20 минут вĕретмелле. Витсе 4 сехет лартмалла. Апат умĕн çур сехет маларах кунне 4 хутчен 100-шер миллилитр ĕçмелле.
- 2 банана вĕтетсе 200 миллилитр шыва ярса 10 минут вĕретмелле. Пыл хушса ăшăлла сăйланмалла.
- 10 финик çырлине çур литр шыва ярса çур сехет вĕретмелле: типĕ ӳслĕк аптратсан пулăшать. 6-7 çырлана 200 миллилитр сĕте ярса пĕçерме те юрать.
- 30 грамм исĕм çырлине вĕресе сивĕннĕ шывра 1 сехет тытмалла та çывăрас умĕн вĕри сĕтпе сыпса çимелле.
- Ачасем валли çакăн пек хутăш хатĕрлеме пулать. 1 панулмие, пусăлă 1 сухана, 1 кишĕре теркăламалла та 2 апат кашăкĕ пыл ярса пăтратмалла. Хутăша кунне 4-5 хутчен пĕрер чей кашăкĕ ĕçтермелле.
- Аслисен 2 апат кашăкĕ теркăланă панулмие, 2 апат кашăкĕ пыла тата 1 апат кашăкĕ теркăланă сухана хутăштарса кунне 4-7 хутчен пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле.
- Пуслă 10 сухана, 1 пуç ыхрана вĕтетсе çур литр сĕте ямалла, çемçеличчен пĕçермелле. Пĕтĕнĕк куракĕпе пыл хушса 1 сехет лартмалла. Сăрăхтармалла, кунне 4-5 хутчен пĕрер апат кашăкĕ ĕçмелле.



ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

# Тухăçĕ пысăк, анчах та...



**Пирĕн кӳршĕсем синеглазка текен çĕрулмие кăмăллаççĕ. Темиçе çул лартса ӳстереççĕ. Мĕнле сорт вăл? Кăçал хамăр та лартса пăхасшăн.**

**ЛЮДМИЛА.**

Канаш районĕ.

Çак çĕрулмие килти пахчасенче кăна ӳстереççĕ. Вăл хăвăрт тата питĕ тухăçлă пулать. Анчах та пысăк виçепе вăрах упранаймасть. Ăна килти нӳхрепре чиперех хĕл каçарма май пур, анчах та пысăк хранилищĕсенче вăл хăвăрт çĕрме тытăнать. Çак сăлтава пулах ăна хуçалăхсем пысăк лаптăксенче çитĕнтермеççĕ.

Унсăр пуçне çак сортăн тепĕр çитменлĕх те пур: çĕрулмин куçĕсем тарăна каяççĕ. Çавăнпа та машинăсемпе тасатнă чухне хуппи нумай тухать. Çапах та килти условисенче усă курма çак сорт начар мар.

ЫЙТУ–ХУРАВ

# Ан кулян...

**Пурнăçра кулянмалли тупăнсах тăрать. Юлашки вăхăтра çине-çинех йăтăнса анакан кĕтменлĕхсем сывлăха хытах хавшатрĕç. Ĕçри лару-тăрăва пула ыйхă та килми пулчĕ.**

**ГАЛИНА.**

Шупашкар хули.

Сире психологпа е психотерапевтпа канашлама сĕнес килет. Виçеллĕ, сайра стресс организмшăн усăллине çирĕплетеççĕ тухтăрсем: нерв тытăмне ĕçлеттерме чухах çакă, анчах вăл пĕрмай канăç паманни сывлăхшăн хăрушă. Вăраха кайнă стреса пула иммун тытăмĕ хавшать, организм чир-чĕрпе – инсульт, инфаркт, гастрит, усал шыçăсем – кĕрешейми пулать.

Лăпланма аптекăра сутакан чĕре куракĕн /пустырник/ чейне ĕçĕр. Кӳрентернине ăшра ан тытăр, кампа та пулин чунăра уçăр. Куççуль кăларни те усăллă.

ШУТА ИЛĔР

# Нашатырь спирчĕпе

Чӳрече тюльне пĕр апат кашăкĕ нашатырь спирчĕ тата икĕ апат кашăкĕ виçĕ процентлă водород перекисĕ хушнă вĕри супăнь шывĕнче лартсан вăл лайăх шуралать.

Кăштах нашатырь спирчĕ хушнă супăнь шывĕпе кĕрĕк аван тасалать. Супăнь шывĕпе нӳретекен татăка пĕрмай улăштарсах тăмалла.

Çуна чухне пĕр витре шыва пĕр-икĕ апат кашăкĕ нашатырь спирчĕ хушсан кĕпе тасарах пулать.



ЧУНРИ

# Турă çырни килĕ-ши?

Эпĕ сана килĕштернине туятăн вĕт. Эсĕ те мана куç хывнине пĕлетĕп. Анчах темшĕн пĕр чĕлхе тупаймастпăр. Ĕçре пĕр-пĕрне кашни кун курнăран-и е урăх сăлтав пĕрремĕш утăм тума чăрмантарать-и?

Тахçан тĕлпулу та палăртнăччĕ. Эсĕ килмерĕн. Яла васкавлăн тухса кайрăн. Сăлтав кăна пулчĕ-и ку? Тепрехинче манăн вăхăт тупăнмарĕ.

Эпĕ сан пирки тахçан маннă тетĕн пуль. Çук, урăх никам та çук ман. Ĕçрен те киле çеç утатăп. Никам та кĕтмен кĕтесре пушă та кичем. Вăхăт irttерес тесе касчĕнех лавккасем тăрăх çӳретĕп.

Пĕлетĕн-и, пур арçынна та санпа танлаштаратăп. Эсĕ чи лайăххи теместĕп. Хам пурнăçра илемлĕреххисене те, пуянраххисене те, кăсăклăраххисене те тĕл пулнă. Анчах та эсĕ лайăхрах. Мĕншĕн, хам та пĕлместĕп. Çынсем сисмен чухне кашни утăмна сăнатăп ĕçре. Çак сăмахсене вунсаккăрти хĕр çырать тесе ан шухăшлăрах. Тахçанах 30 çултан каçнă эпĕ. Ватă хĕр. Ĕçри хĕрарăмсем те хăш чухне куç айĕн пăхнăн туйăнать. «Качча та каяймасть, никама кирлĕ мар», – теççĕ-ши? Пачах килĕшменни патне чун туртмасть-çке, мĕн тăвăн? Ачисене садике, шкула ăсатакан тантăшăмсем те, тăвансем те кашни курмассерен çемье çавăрмалли пирки аса илтереççĕ.



Качча каймалли вăхăтсем иртсе пынине хам та лайăх пĕлетĕп-ха, анчах çавçавах сан пирки кăна шухăшлатăп. Тен, Турă çырни хапха умне килессе кĕтмелле мар, хамăн пĕрремĕш утăм тумалла.

**СВЕТЛАНА.**

САНĂН ТУСУ ПУЛАМ-И?

**55 çултан иртнĕ сăпайлă, кăмăллă, ĕçе юратакан хĕрарăмпа паллашма кăмăл пур. Ялта пурăнатăп, выльăх-чĕрлĕх усратăп. Нумай-нумай çул шкулта учительте ĕçлерĕм. Эпĕ 60 çулта. Аслă пĕлӳллĕ, йĕркеллĕ, сиенлĕ йăласемсĕр арçын. Ватлăхра пĕр-пĕрне ăнланса пурăнма хам пекех шанчăклă мăшăр шыратăп.**

**ИВАН.**

* * *

**Эпĕ 37 çулта. Авланман. Ялта ватă аннепе пурăнатăп. Кил-çурт тĕреклĕ. Çемье çавăрма 25-33 çулсенчи хĕр-хĕрарăмпа паллашас кăмăл пур. Ача пурри чăрмав мар. Пирус туртмастăп, эрех-сăрапа иртĕхместĕп.**

**Телефонсем – редакцире. 28-83-67 тата 56-03-54 номерсемпе ыйтса пĕлмелле.**

**САША.**

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Вĕлтĕрен ачи

Аннепе кăна çитĕннĕ эпĕ. «Аçу çук сан, вăрçăра вилнĕ», – ăнлантаратчĕ çывăх çыннăм. Урама тухсан вара темшĕн «вĕлтĕрен ачи» тесе чĕнетчĕç мана. Сак çинчи кинемисенчен те пĕрре мар илтнĕ çак сăмаха. Малтан вăл мĕне пĕлтернине пачах та ăнланмастăм, çавăнпа вĕсен «пăшăл пăттине» хăлхана та чикмен. Пĕррехинче кукамай хăйĕн йăмăкĕпе аннене тата мана шеллесе темĕнччен калаçрĕç. Çывăрать ку терĕç-ши, эпĕ вара, куçа хупса выртаканскер, вĕсен кашни сăмахне ăша хыврăм. «Вĕлтĕрен ачи» ят ман çума мĕншĕн çыпăçнине çав каç аван тавçăрса илтĕм.

Вăхăт иртнĕçемĕн атте текенни хамăр ялтах, тепĕр касра пурăннине те пĕлекен пултăм. Ачи йышлăччĕ вĕсен. Урампа пынине курсан мана ялан чулпа перетчĕç. Лавккана кайсан Курак Çерушĕн арăмĕ куç айĕн пăхнине те пĕрре мар асăрханă. Çитĕннĕ май анне мана качча каймасăр çуратнишĕн аванмарланма тытăнтăм. Юлташсемпе хутшăнас вырăнне каçсерен кĕнеке вулаттăм. Шкул пĕтерсен чи çутă ĕмĕтĕм пурнăçланчĕ: никам пулăшăвĕсĕрех медицина институчĕн студенчĕ пулса тăтăм. Вĕренсе тухнă хыççăн хамăр тăрăхрах ĕç тупрăм. «Вĕлтĕрен ачи» пирки ялта пурте тахçанах манса кайнă ĕнтĕ. Ял çыннисемшĕн «Валерий Сергеевич» эпĕ халĕ. Калама çук хисеплĕ çын. Хайхи чулпа перекен ачасем тепĕр чухне больницăна сăлтавсăрах пырса «эпир санпа тăвансем» тесе те йăпăлтатаççĕ. Нихçан нимӗнпе те пулăшман Курак Çерушĕ кивçен укçа ыйтма та именмест. Куç айĕн пăхакан арăмĕ шăлне тӳлевсĕр ларттарасшăн. «Тăван ывăлу-çке, мĕншĕн пулăшмасть сана?» – тесе калама епле хăять-ши?

Аттене хывман эпĕ. Хам пурнăçра пĕр хĕре те суйса курман. Сăмахпа кӳрентернине те астумастăп. Вĕреннĕ чухне пĕр пикене куç хыврăм та кăштахран туй кĕрлеттертĕмĕр. Унран лайăххи те çук çĕр çинче. «Çамрăк чухне майрасен шучĕ те çукчĕ», – тесе мухтанма та пултараймастăп, мĕншĕн тесен вăхăт irттермелле çӳрес йăла нихçан та пулман. Мемме те, пиçмен пашалу та мар. Сăнран та аптрамастăп. Хам çавнашкал, темиçе çынна юратаймастăп. Турри чĕрере пĕр çын валли кăна вырăн уйăрса панă. Вăхăтĕнче ман мăйран та хĕрсем çакăнатчĕç. Институт картлашки çинче те сыхласа тăратчĕç. Килĕсене улах тума, чей ĕçме те пĕрре мар чĕннĕ.

«Вĕлтĕрен ачи» тесе ахалех кӳрентернĕ мана. Атте тăванĕсемпе пырса аннене çураçса та кайнă-мĕн. Туй хăçан пуласси те палăртса хунă. Кукаçи качча тухма ирĕк паман. Туй умĕн виçĕ кун маларах анне Мускава тухса вĕçтернĕ. Хайхи Курак Çерушĕн хулара тепĕр арăм пулнине илтнĕ кукаçи. Унпа уйрăлса пĕтмесĕрех лешĕ çамрăк хĕр пуçне çавăрттарнă ялта. Кайран икĕ ачаллă хĕрарăм патне киле пырса кĕнĕ.

Хĕрарăм пирки япăх калаçакан, çилхăван арçынсене хисеплеместĕп. Авланса çемьепе лăпкăн пурăннине нимĕн те çитмест. Анне мана лайăх ӳстернĕ, нихçан та сас хăпартса курман. Сĕтел яланах тулăх пулнăран атте çуккине туйма та пултарайман эпĕ. Куккасем пулла, вăрмана илсе çӳренĕ, кукаçирен пăта çапма вĕреннĕ. Икĕ хутлă чаплă çуртра пурăнать халь анне. Куç тулли мăнукĕсемпе савăнать. Пĕчĕк чухнех аннене кермен лартса парас шухăш пурччĕ. Чи çывăх та хаклă çынсене çаплах тав тумалла. Курак Çерушĕпе пĕрлешнĕ пулсан манăн пурнăç еплерех пулĕччĕ-ши? Аннене тарма пулăшнăшăн кукаçие тем пек тав.

**ВАЛЕРА.**

ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Купăста яшки йăлăхтарман-ха

Эпĕ упăшкан кĕсйине нихçан та тĕрĕслеместĕп. Укçа памасăр тарăхтарни пулман халиччен. Юлашки вăхăтра киле час таврăнманни кăна вĕчĕрхентерет. Ялан васкавлă ĕç нумай унăн. Тепĕр чухне ман пирки пачах манса каять тейĕн.... Туйăмĕсем сӳнме те ĕлкĕрчĕç-ши? Мăшăрланнăранпа виçĕ çул çеç иртнĕ-ха. Тен, урăххи, манран та лайăхраххи, чипертереххи тупăннă? Арçынсене купăста яшки хăвăртах йăлăхтарать теççĕ вĕт. Ак хайхи, пĕррехинче кĕпи кĕсйинчен хут татки тухса ӳкрĕ. «Шăнкăравла. Надя», – тенĕ. Аяларах телефон номерне палăртнă. Ав епле иккен. Юлашки вăхăтра киле мĕншĕн кая юлса килнине тӳрех ăнлантăм. Кăмăл хуçăлчĕ, куççуль капланса килчĕ. Тарăхнипе кĕпине машинăран çумасăрах кăлартăм та шкапа çакса хутăм. Мĕнпур япалана пуçтарса анне патне тухса каяс шухăш та çуралнăччĕ. Чăтрăм, хама алла илме тăрăшрăм. Чи çывăх тантăшăм патне шăнкăравларăм. «Хăв пирки шухăшла, мĕскер эс, тĕнче пĕтмен-иç, шăнаран слон тума ан васка-ха», – лăплантарма тăрăшрĕ мана яланхиллех. Кăштахран такси тытса вĕçтерсе те çитрĕ. Шукăль çӳреме юратакан Света мана парикмахерские çавăтса кайрĕ. Вăрăм çӳçе касрĕç, сăрларĕç... Суту-илӳ çуртне кĕрсе хитре кĕпе туянтăмăр. Çинçе пилĕкĕме çат тытаканнине. «Халь сан пата каятпăр та ияв сĕтелĕ хатĕрлетпĕр. Эпĕ сана пулăшатăп», – терĕ Света. Хитре кĕпе çийĕн саппун çакса ятăм та йăпăр-япăр ĕçе пуçăнтăм, духовкăна французла çĕрулми лартрăм. Тантăшăм Сашăн юратнă кăмпа салатне хатĕрлерĕ, пулă ăшаларĕ. Пахчаçимĕçпе улма-çырла каскаласа хутăмăр – пулчĕ те. Алăкран кĕнĕ-кĕмен Саша хăй ытамне илчĕ. «Санран хитри çĕр çинче те çук. Паллама та çук, çур кунра тата та чиперленнĕ эсĕ», – терĕ ман çинчен куç илмесĕр. Часах телефонĕ шăнкăртатрĕ. «Надя, шăнкăравлаймарăм, эсĕ çырса панă хут таткине таçта çухатрăм. Телефонра та упранса юлман. Ыран сана ĕçре кĕтетĕп», – ман умра уççăнах калаçрĕ Саша. Упăшкана купăста яшки йăлăхтарма ĕлкĕрейменнине вăл калаçăвне вĕçличченех ăнлантăм. Хама лайăх мар пулса кайрĕ, хут татки çыраканни ман хуняман йăмăкĕн хĕрĕ иккен. Пирĕн туйра та пурччĕ вăл. Юрать, тантăшăм ăслăрах пулчĕ, тытса чарчĕ, тарăхнипе шăнкăравласа тустарас патнех çитнĕччĕ. Нихçан та васкамалла мар-мĕн. Надя Чĕмпĕртен Шупашкара вĕренме килнĕ, амăшĕ йывăр чирленĕ май ĕçе вырнаçас шухăшлă иккен.

«Атя Надьăна хăнана чĕнетпĕр», – сĕнтĕм эпĕ. Тепĕр çур сехетрен пурте пĕрле уяв сĕтелĕ хушшине вырнаçрăмăр. Хут татки пирки вара мăшăра калама аванмарлантăм. Хăй куриччен хура кĕпине хăвăртрах машинăна персе чикрĕм.

**ЕЛИЗАВЕТА.**



*Иван ТЕНЮШЕВ*

# Сарă конверт

**/Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/.**

Шкул умĕнче çеç те мар, аслă ял умĕнче. Ара, тĕрĕ тĕрлеме Çерук ачаранах юратнă-çке-ха. Тин ӳкнĕ юр тĕслĕ шап-шурă кĕпепе çӳрет шкула. Кĕпи аркине, çухине, çанни вĕçĕсене пурçăн çиппе хăй тĕрлесе капăрлатнă. Пуçĕнче те – тĕрĕллĕ шурă тутăр.

Серафима Леонтьевна Закускина учительница тĕрĕ ăсти пулнине чи малтан асăрхакансенчен пĕри шкул директорĕ хăй пулчĕ.

– Хăвăрах тĕрленĕ-и? – ыйтса пĕлчĕ пĕррехинче унран учительсен пӳлĕмĕнче.

– Кам тĕрлетĕр ĕнтĕ... Хамах... – кĕпи çинчи чечексем пекех хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайрĕ ун чухне учительница.

– Ачасене те вĕрентмĕрши? Мĕн кирлине – пирне те, çиппине те – шкул укçипе туянса паратăп...

Серафима Леонтьевна чапа тухасси çакăнтан пуçланчĕ те ĕнтĕ. Шкулти тĕрĕçĕсен пĕрремĕш куравне коридора кăларсанах вулав çурчĕн пуçлăхĕ ун патĕнче тĕмсĕлсе тĕпĕртетрĕ, учительницăна çав кунах вулав çурчĕ çумĕнче ялти тĕрре килĕштерекен çамрăк хĕрарăмăн кружокне йĕркелеме сĕнчĕ. Кунта та ĕç ăнăçса пычĕ пултарулла учительницăн.

Тепĕр йăпану та пур Серафима Леонтьевнăн: спортпа питĕ туслă, колхоз хĕрĕсен волейбол командинче тăрать. Ку команда районти спартакиадăра çĕнтерчĕ. Çерук шкулта вĕреннĕ чухнех спартакиадăсене хутшăнатчĕ. 100 метра чупассипе унăн Сăкăт шкулĕнчи йăрăс пӳллĕ Рыбаковăпа ăмăртма тиврĕ.

– Стартра Рыбаковăпа Закускина! – пĕлтерчĕç рупорпа.

– На закуску рыбка... – ихĕлтетсе илчĕ тахăшĕ.

– Çыртмалли валли пулă... – чăвашла куçарчĕ çавна тепри.

Çӳллĕ Рыбаковăпа чылаях лутра Закускина финиша харăс чупса çитрĕç.

– Хăшĕ çĕнтернине палăртма çук. Тепре чупăр! – хушрĕ сарлака çăварлă рупор.

Лутра хĕрача çӳллинчен иккĕмĕш хут чупсан та пĕр шит юлмарĕ.

– Пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене Рыбаковăпа Закускина йышăннă тесе шутлăпăр! – тинех килĕшрĕ хайхи рупор.

Çав лутра хĕр халĕ хăйĕн çивĕчлĕхĕпе, ĕçченлĕхĕпе Таяпана тĕлĕнтерет.

Тĕреклĕ кĕлеткеллĕ хĕр тĕрĕллĕ тумпа ял урамĕ тăрăх шкулалла ярăнса утса иртет, кӳлĕри шурă акăш тейĕн. Пĕве çитнĕ йĕкĕтсем ун çине ăмсанса пăхса юлаççĕ. Камăн арăмĕ пулса савăнтарĕ-ши? Хăйне пăтраштарнăран ăна ку ĕçрен пăрчĕç, çакăн хыççăн каççерен урамра е улахра саккăрла çаптарса ăста ташлакан пулса тăчĕ.

Серафима Леонтьевна канмалли кун час-часах Анаткаса килне çӳрет. Тăван ялĕнчен çуран килекенскере Михаляпа икĕ юлташĕ ыраш пуссинче тĕлех пулчĕç.

– Тинех çакланчĕ! Манăн пулма килĕшмерĕ, эппин, никамăн та ан пултăр... – пăшăлтатса каварлашрĕ Михаля юлташĕсемпе.

Çук, ансат мар харсăр хĕре вĕсем сарнă.

– Милицие пĕлтертĕн-и хăть? – ыйтрĕ унран висĕ кунран хваттер хуçи арăмĕ. – Мурсем виççĕшĕ те ялтан тухса кайса çухалнă...

Хваттер хуçине Серафима Леонтьевна нимĕн те каламарĕ, вырăн çинчен тăрсан тӳрех шкул директорĕ патне кайрĕ.

– Вăл путсĕрсене кирек мĕн тăвăр, эпĕ вара ку ялта урăх ĕçлеме пултараймастăп. Мана шкулта текех ан кĕтĕр... – йĕре-йĕре каларĕ вăл директора.

сăпайлă, тӳлек тытать. Шкул коллективĕнче те, ял хушшинче те вăл çынсемпе хирĕçсе, хирĕлсе калаçнине илтмен. Класри ачасем пурте ăна сасă хăпартмасăрах итлеççĕ. Тепĕр тесен, унăн урокĕсенче ачасене ашкăнма вăхăт пачах юлмасть. Мĕн вĕрентни, мĕн туни пĕтĕмпех кирлĕ, усăллă, кăсăк.

Йĕкĕтсенчен çывăх тус çук унăн. Эппин, чун-чĕри юрату тыткăнне çакланман-ха. Класпа ĕçленĕ, икĕ тĕлте икĕ кружока ертсе пынă май тата спортпа туслăран йĕкĕтсемпе явăçма хĕрĕн пушă вăхăт пачах юлмасть. Ял вĕçĕнчи урлă урамра пурăнакан вăрăм Михаля учительница хыççăн танккаса пăхрĕ, анчах кăлăхах. Паллах, хĕре йĕкĕт суйласа илет, çавăнпа пĕрлех хĕрĕн те ун пек тивĕç çук мар. Пĕри тепĕрне килĕшмесен юрату çулăмĕ хыпса илеймест. Çавнашкал пулса тухрĕ Михаля хĕре çулăхнинчен те.

– Ман хыçран тек çӳренĕ ан пул. Эсĕ качака мар, эпĕ купăста мар! – касайса татрĕ йĕкĕт ĕмĕтне учительница. Ара, йĕкĕте тиркеме сăлтав тупăнчĕ çав. Вăл пахчаçимĕç бригадин бригадирĕччĕ, колхоз кассипе хăйĕн енчĕкне парăнтарма. Хăмла шалçинчен Михаляран вĕçерĕнчĕ-вĕçерĕнчех. Виççĕн виççĕнех çав, пурпĕр тарса хăтăлаймарĕ. Кăшкăрни те пулăшмарĕ. Çăварне хăйĕн тутăрĕпех пăкăларĕç.

Ирхи шуçăм пек таса ыраш хăмăлĕ çинелле çапса-тапса йăвантарчĕç, ирĕксĕрлесе мăшкăлласшăн тапаçланчĕç. Анчах спортсменкăна парăнтарасси сĕтел хушшинче çуллă пăтă çиесси мар иккен. Михаляна икĕ пĕççи хушшинчен тапса айккинелле сирпĕнтерчĕ, унăн тусĕсене куçран тĕрĕ йĕппипе тиресле хăмсарчĕ. Виççĕн виççĕнех çав, ура çине тăма памаççĕ хĕре. Çапаççĕ те тапаççĕ, кăкăрĕ çине сикеççĕ. Юрать-ха çулпа лав тĕпĕртеттерсе килни курăнчĕ. Пуçтахсем тинех пăрахса тарчĕç.

Çавăн пек мăшкăл тӳснĕ хĕр хăйĕн хваттерне çитмĕлти карчăк евĕр аран-аран сĕтĕрĕнсе çитрĕ. Тĕрĕллĕ кĕпи юнпа пĕвеннĕ, тăпрапа вараланнă. Унран та ытларах чунĕ тарăхупа тулнă, пĕтĕм шăмшакĕ сурса ыратать. Висĕ кун тăраймасăр выртрĕ. Ыраш пуссинче хĕр кăшкăрнине аякран илтекенсем пулнă иккен. Тискерлĕх çинчен ялта хавха

Çав кунах хĕр ялтан тухса кайрĕ. Шкул директорĕ ĕçрен хăй ирĕкĕпе тухса кайнă учительницăна шыраттарма шухăшламарĕ. Шыраттарнă пулсан та тăруках тупаймастчĕ. Тен, вуçех тупаймастчĕ. Йăмăкĕ Кĕтерук вăрттăн пĕлтернĕ адреспа пĕрле ӳснĕ шанчăклă тантăшĕ Марье патне хăвăрт тухса шăвăнчĕ Çерук аякри хулана Ленинграда. Марье ăна мĕн тери ăшшăн та тунсăхлăн кĕтсе илнине çырса тăмăпăр. Ку унсăрах паллă. Хăй вăхăтĕнче Мĕтри Хадарова кулак туса çемйипех Çĕпĕре ăсатмаллаччĕ. Çакнашкал инкекрен вăл Ленинграда вăрттăн тухса кайса хăтăлчĕ. Хăйĕнчен арăмĕпе хĕрне те хăвармарĕ.

Кăмăлĕ пусăрăннă Çерука тантăшĕ лăплантарма тăрăшать:

– Ан кулян, ан хуйхăр. Сывлăху та юсанĕ, саншăн та телейлĕ кун çитĕ...

– Çитетех пулĕ... – хуравлать Çерук. – Мускавпа Ленинград хушшинче йĕпрен кĕпер хунă тет, пире çырнă телей çав кĕперпе килет тет...

Марье хăй медицина училищинчен вĕренсе тухнăччĕ, пысăк больницăра вăй хуратчĕ. Пĕрер çул ĕçлесенех малалла вĕренсе тухтăра тухма палăртса хунăччĕ. Марье ашшĕ Мĕтри Хадаров ентешне хăвăртах ĕç тупса пачĕ. Хĕр кĕçех трамвай çӳретме хăнăхрĕ, учительницăран водитель пулса тăчĕ. Ĕçĕ йывăрах мар темелле, теплерен контакт пĕкки вĕçерĕнсе кайсан тертленterет. Тепĕр терт – ыраш пуссинче мĕн пулса иртни пĕрмаях аса килсе асаплантарать. Манăçми чĕр мăшкăл çаплах чĕрене ыраттарать, куç шăрçине сиктерет.

Сиплесен темле суран та ӳт илетех. Сывлăх пулсан темле мăшкăл та майĕпен-майĕпенех манăçа тухать. Темиçе уйăхран Çерук хулара ялтăркка куçпа, хĕрлĕ питпе çӳреме пуçларĕ. Хăнăхнă ĕçе блокада вăхăтĕнче те пăрахмарĕ. Вăл çӳрекен трамвай фронтăн малти линийĕ патнех çитекен пулчĕ, çитетчĕ те каялла çаврăнатчĕ. Трамвай çӳретессине пăрахма тиврĕ Çерукăн. Ара, Марье ӳкĕтлерĕ хăй пек медик пулма. Медучилищĕрен вĕренсе тухсан Çерук фельдшерица пулса тăчĕ.

## Тупа ту кăна тĕл пулаймаççĕ

Май уявĕ умĕн утма-çӳреме пултаракан Ленинград урамсене, проспектсемпе тăваткăл лаптăксене кирпĕч ванчăкĕнчен, çӳп-çапран, хĕл юлашкийĕсенчен тасатма тухрĕ. Хула çыннисене А.С.Пушкин çурчĕ çывăхĕнче эвакогоспиталь çыннисемпе пĕрле ĕçлеме тиврĕ. Çав çынсем хушшинче шурă калпакĕ айĕнчен илемлĕн усăнса тăракан йĕкĕр çивĕтлĕ хĕр аслă матрос куçĕ тĕлне пулчĕ. Пуçтарнă çӳп-çапа вăл тантăшĕпе Марук Хадаровăпа пĕрле наçилкка çине тиет, тути хуллен кăна хурлăхлă темле кĕвĕ ĕнĕрлет. Юрă ăсти ахăр. Ун патне çывхарса пĕр-пĕр ăшă сăмах каласшăнччĕ аслă матрос, сасартăк хăямат пысăкăш çунатлă синкер мĕлкесем курăнса кайрĕç. Чӳречесем çил лăсканă пек чĕтренеççĕ, карнизсенчен хăйăр тăкăнать. Гитлер хурчкисем плавбазăра якорь пăрахнă карапсем çине бомбăсем тăкма тытăнчĕç. Пĕр хурчки урам тасатакансен тĕлĕнчен пулеметран вутлă çумăр çутарса иртрĕ.

**/Малалли пулать/.**

## КИВЕЛМЕН ЮРĂСЕМ

### *Яков ПОЛОНСКИЙ* */1819-1898/*

*Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренсе тухакансен кашнинех юратнă юрăсен тетрачĕсем пулнă. Ара, унта пĕтĕмĕшле пĕлӳ илнисĕр пуçне пулас учительсене юрă урокĕсем irттерме те вĕрентнĕ-çке. Пирĕн аннен те пурччĕ унашкал хăмăр хуплашкаллă хулăн тетрадь. Вăл "Костер" ятлă юрăпа уçăлатчĕ. Ку вăл XIX ĕмĕрте палăрнă Яков Полонский поэтăн "Чикан хĕр юрри" пулнă.*

*Яков Петрович Полонский 1819 çулхи раштав уйăхĕн 6-мĕшĕнче Рязань хулинче пуян мар дворян çемйинче çуралнă. Гимнази хыççăн Мускав университечĕн юридици факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Темиçе çул чиновникре ĕçленĕ. 1851 çулта Питĕр хулине куçать, унта пĕр хушă "Русское слово" журнала редакцилет. Каярах ют çĕршыв цензури комитетĕнче хĕсметре тăрать, çав вăхăтрах Пичет ĕçĕн тĕп управленийĕн членĕ пулнă. Яков Полонский 1898 çулхи юпа уйăхĕн 18-мĕшĕнче вилнĕ.*

*Сăвăсем çырма университетра вĕреннĕ çулсенчех пуçланă. 1844 çулта малтанхи сăвă кĕнекине пичетлесе кăларнă. Унăн литература еткерлĕхĕ пысăках мар, çапах та унта вăл паллă йĕр хăварнă. Çӳлерех асăннă "Чикан хĕр юрри" халăхра анлă сарăлнă. Ăна паян та юратаççĕ.*

### Чикан хĕр юрри

Тĕтре витĕр ман вучахăм
Çуталса выртать инçе.
Сывпуллашăпăр вăраххăн
Сĕм çĕрле кĕпер çинче.

Эпĕ, тусăмçăм, ăсанăп
Ирпеле çеçен хире.
Чикансен çăра тусанĕ
Хыççăн ыткăнăп хиврен.

Тĕрĕллĕ хитре шел тутăр
Тĕвĕлесе çых парне.
Кун пĕлтерĕшĕ те пур-тăр, –
Ас илтерĕ пĕр-пĕрне.

Ман шăпаçăма кам вăлтĕ?
Кам кĕресшĕн ман хĕве?
Кăкăрăм çинче кам салтĕ
Эсĕ çыхнă çав тĕвве?

Юрă юрлĕ, вылĕ-кулĕ
Урăххи чĕрçӳ çинче.
Тен, мана та аса илĕн
Хушăран инçе енче!

Тĕтре витĕр ман вучахăм
Çуталса выртать инçе.
Сывпуллашăпăр вăраххăн
Сĕм çĕрле кĕпер çинче.

### *Иван СУРИКОВ* */1841-1880/*

*Иван Захарович Суриков 1841 çулхи пушăн 25-мĕшĕнче Ярославль кĕпĕрнинчи Новоселово ялĕнче çуралнă. 60-мĕш çулсенче А.Н.Плещеевпа паллашать. Малтанхи сăввине пичетлеме шăпах вăл пулăшать. Кун хыççăн шĕкĕр хулари хаçат-журналта Иван Суриков сăввисем тăтăшах кун çути кураççĕ. 1871 çулта малтанхи сăвă кĕнеки тухнă. Поэт 1880 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче Мускавра вилнĕ. Унăн "Пилеш" ятлă сăвви халăхра сарăлса юрра çаврăннă.*

### Ма эс хумханатăн...

Ма эс хумханатăн,
Çип-çинçе пилешĕм,
Авăнса анатăн
Çĕр çумне çитесшĕн.

Юнашар, çул урлă,
Сарлака шыв çулĕ.
Юман ларнă хурлă
Унта питĕ çӳллĕ.

Епле ман, пилешĕн,
Ун патне каçасчĕ,
Хумханмасăр, меллĕн,
Юнашар ларасчĕ.

Туратпа туратăн
Ăшшăн сĕртĕнесчĕ,
Шĕпĕл-шĕпĕл вăрттăн
Ир те каç пуплесчĕ.

Анчах шел, пилешĕн
Тĕмсĕлни те кăлăх.
Эппин, вăл пĕччеңсĕн
Ĕмĕр ларĕ тăлăх.

**А.ЮМАН куçарнă.**





# Юратман çынпа пурăнасси – тĕрмепе танах...

**Çапла çирĕплетет Ольга Куриленко – Раççей актриси, "Бонд хĕрĕ", Голливуд çăлтăрĕ**



**13 çулччен Ольга хăй çуралнă Бердянск хулинче пурăннă. Каярахпа çемье Мускава куçнă. 3 çултан, 16 тултарсан, хĕр модель агентствипе контракта алă пусса Парижа куçнă. 27 çула çитсен вара пуç çаврăнса каймалла карьера тунă – "Бонд хĕрĕ" пулса тăнă. Кайнă вара!.. Малтанах Ольга Дэниел Крейгпа пĕрле вылянă. Халĕ унăн кинори партнерĕсем – Том Круз, Бен Аффлек, Рассел Кроу... Юлашки ăна фильмра ўкерĕнме тўрех çирĕплетнĕ – нимĕнле "пробăсăрах"!**

## Амăшне çывăх сăнар

– Рассел мана сценари ярса пачĕ. Унпа паллашнă хыççăн манăн хăш сăнара калăплас килнине пĕлтерме ыйтрĕ. Мана Стамбулти хăна çурчĕн хуçи Эйша питĕ килĕшрĕ. Унăн мăшăрĕ Тĕнче пĕрремĕш вăрçинчен таврăнайман. Вырăнти йăла-йĕркепе килĕшўллĕн арçыннăн шăллĕ Эйшăна качча илесшĕн. Çамрăк хĕрарăм вара хирĕçлет. Тепĕр тесен, вăл йăла-йĕркене пĕрремĕш хут мар ĕнтĕ пăсать – Эйша хăйне çураçнă каччăпа мар, савнийĕпе çемье çавăрма пултарнă...

Рассел икĕ кунран шăнкăравларĕ, мана рольте çирĕплетнине каларĕ. Ăна пĕртенпĕр ыйту кăсăклантарчĕ – эпĕ турккăлла мĕнле хăвăрт вĕренме пултаратăп? Манăн сăнар турккă хĕрарăмĕ-çке, акăлчанла пĕлсен те нумай чухне хăйĕн чĕлхипе калаçать. Малтанах, чăн та, шикленнĕччĕ. Анчах та чĕлхесем енĕпе пултарулăх пур манăн.

Темиçе кун хамах вĕрентĕм – ятарлă программăпа усă курса. Каярахпа пире Рассел Австралие илсе кайрĕ, мана тепĕр виçĕ актерпа тата вĕрентекенпе пĕрле офисри пўлĕмре хупса тенĕ пек тытрĕ – вĕсен те турккăлла калаçмаллаччĕ фильмра. Çапла вара эпĕ сăнара калăплама кăна мар, хамран сăмахсем хушса хума та хăнăхрăм ют чĕлхепе. Сăмах май, юлашки ытти ĕçре те мана "пробăсăрах" çирĕплетрĕç рольсенче: "Идеальный день" /Тим Роббинспа пĕрле ўкерĕннĕ/, "Ускорение" /Морган Фриманпа/, Джереми Айронспа пĕрлехи ĕçĕн вара хальлĕхе ячĕ те çук-ха. Мана çапла шанни, пĕлни хавхалантарать паллах.

## Ĕмĕтленме те пултарайман...

**– Эсĕ çакăн пек карьера çинчен ĕмĕтленме пултарнă-и?**

– Çук. Мĕншĕн тесен ку ĕмĕт нихăçан та пурнăçланаймĕччĕ. Çакна пĕле тăркачах мĕншĕн пуçа ыраттармалла? Анчах манпа танлаштарсан анне – нихăçан та тўрленейми ĕмĕтленўçĕ. Вăл искусствăна питĕ юратать. Шкулта ачасене ўкерме вĕрентнĕ. Искусство енĕпе кăшт тайăлнă теме те пулать ун пирки. /Кулать/. Мана вăл яланах эпĕ илме пултарнинчен ытларах пама тăрăшатчĕ – пĕлў енĕпе. Эпĕ ташлама, ўкерме вĕреннĕ, музыка шкулне çўренĕ. Хам вара кукамай пек тухтăр пулма ĕмĕтленеттĕм...

Вылямалли упа пурччĕ манăн, ăна "операци" туса халтан яраттăм вара. Пĕррехинче анне укçа пухса çитерчĕ те, эпир пит пуянах пурăнман, мана Мускава илсе кайрĕ. Çук, лавккасем тăрăх çўреме мар /вăл вăхăтра пирĕн Бердянскра, тĕп хуларипе танлаштарсан, нимĕн те тенĕ пек çукчĕ пулин те/ – Горький паркĕнче, Кремльте, музейсенче пултăмăр. Тĕлĕнмелле ĕç-пуç шăпах çавăн чухне пулса иртрĕ те. Метрора тĕккеленнĕ вăхăтра пирĕн пата пĕр хĕрарăм пычĕ те манран модель агентстви пирки ыйтрĕ: "Пулса курнă-и хăçан та пулин, кăсăклантармасть-и?" Мĕншĕн шăпах ман пата пынă-ха çав хĕрарăм? Эпĕ ыттисенчен вăрăм та çăра çўçпе кăна уйрăлса тăраттăм – пилĕк таран... Çапла эпĕ пĕрремĕш хут укçа ĕçлесе илтĕм – 30 доллар. Пирĕн çемьешĕн калама çук нумайччĕ ку.

## Телейлĕ ачалăх

Манăн ачалăх телейлĕ пулнă. Питĕ телейлĕ. Аннепе кукамай мана питĕ юратнă. Вĕсен юратăвне кашни самантра туйса тăнă эпĕ, унра чăмпăлтатнă. Урăх мĕн кирлĕ? Паллах, тутлă апат-çимĕç çитсе пымастчĕ, джинс курман эпĕ... Анчах та чи кирли мар вĕт ку. Пуян çемьесенче ўсекен тантăшăмсем те пурччĕ. Анчах та вĕсен куçĕсем телей сапаламастчĕç. Вĕсен ашшĕ-амăшĕ укçа ытларах ĕçлесе илме тăрăшатчĕ те ачисемпе хутшăнма вăхăт та юлмастчĕ.

Каярахпа эпĕ Мускава ĕçлеме çўреме пуçларăм. Çулталăка яхăн çапла сĕтĕрĕнсе пурăнтăм – Бердянскран пуйăс 20 сехет каятчĕ. Анчах та Мускавра хваттер тара илме пултарайман эпир.

**– Аçу нимĕнпе те пулăшман-им?**

Эпĕ виççĕре чухне пăрахнă вăл пире. Вăл ташăçă пулнă, сăвă та çырнă. Эпĕ унпа 8 тултарсан паллашрăм. Çавăнтанпа унпа сайра-хутра курнăçкалатпăр, анчах çакна хутшăнатпăр теме йывăртарах пулĕ.

## Тăрăшни пулăшнă

**– 16-ра вара модель бизнесне чĕннĕ сана...**

– Контракта алă пусни ниме те пĕлтермест. Хĕре никам та асăрхамасассăн киле яраççĕ. Нумайăшĕ çапла вĕçлерĕ карьерине. Хăшĕпĕри, вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, пачах урăх вырăнсене çакланать... Эпĕ питĕ тăрăшса ĕçлерĕм. Асăрхарĕç, хăварчĕç. Ĕç нумайччĕ. Анчах та актер пултарулăхĕн урокĕсене çўреме пуçласан кăна хама чăнласах телейлĕ туйса илтĕм.

**– Санăн гражданство та пур – çавăншăнах качча тухма тиврĕ-и?**

– Çук, фотографпа килĕштерсех çемье çавăрнăччĕ. Гражданство та, чăн та, кирлĕччĕ. Ĕçе пула тĕрлĕ çĕршыва çитме тиветчĕ, хамăн паспортпа вара посольствăсемпе консульствăсенче черет тăрса тăн тухатчĕ – виза илессишĕн. Модельсене никам та пулăшмасть вĕт. Эпĕ çак ĕçре 10 çул тăрăшнă – пĕлетĕп. Тепĕр чухне лайăх саккассене шăпах визăна вăхăтра хатĕрлейменнине пула çухататтăм. Франци паспорчĕпе пурнăç çăмăлланчĕ.

## Юлташ-и е упăшка-и?

**– Çапах та аннў эсĕ Седрик ван Моле юратса мар, юлташла качча тухнине персе янăччĕ таçта...**

– Паллах, апла мар. Седрикпа эпĕ Парижа çитсен тўрех тенĕ пек паллашнă. Вăл манран 9 çул аслăрах. Ун чухне унăн хĕр тусĕ те пурччĕ. Тăватă çул хутшăнтăмăр. Унтан туйăмсем вăй илчĕç. Пĕрлешрĕмĕр. 4 çултан уйрăлтăмăр. Эпир юлташла ытла та вăрах хутшăнтăмăр пулĕ. Иксĕмĕр те ирĕклĕхе хаклаттăмăр. Вăл маншăн упăшка та, пичче те пулнă. Малтанхи вăхăтра уйрăлнă чухне макăраттăм та – Седрикăн хăйĕн ĕçĕ пулнă вĕт, вăл манпа пĕрле çўремен.

**– Парижран мĕншĕн кайрăн? Эсĕ халĕ Лондонра хваттер туяннă вĕт?**

– Францире 13 çула яхăн пурăнтăм. Актер карьери те унтах пуçланнă. Акăлчан фильмĕсенче те ўкерĕнес килнипе вăхăтлăха тесе Нью-Йорка тухса кайрăм. Анчах та конкуренци питĕ вăйлине тўрех туйса илтĕм. Никам та палламасть мана унта, никам та кĕтмест. Голливуда Европа урлă кăна лекме май пуррине унта ăнланса илтĕм. Анчах та Америка агенчĕсем Францире кастинг питĕ сайра ирттереççĕ. Вăт Лондонра вара – тăтăшах. Çапла эпĕ унта çўреме пуçларăм.

## Вилсен те – ирĕкре...

**– Нумайăшĕ "кукка" пулăшăвĕпе усă курса карьера тăвать. Эсĕ çав çула суйлас темерĕн-им?**

– Эпĕ нихăçан та урăх çын шухăшласа кăларнă йĕркене пăхăнса пурăнаймăттăм. Вилем, анчах та – ирĕкре. Раççейре тата экс-совет çĕршывĕсенче хĕрарăм пуян упăшкин е еркĕнĕн пулăшăвĕпе усă курса кăна "çын пулма" пултарать текен шухăш çирĕпленнĕ. Мана çакă яланах питĕ тарăхтаратчĕ. Акă ĕнентерме пултартăм – хĕрарăм укçа ĕçлесе илме те, карьера пусмипе улăхма та пултарать. Арçынсăрах. Манăн пуян упăшка та, влаçри арçын та пулман. Юратман çынпа пĕр çуртра пурăнни маншăн тĕрмене хупнипе танах.

**– Иккĕмĕш упăшку – американ...**

– Вăл кинобизнеспа пачах та çыхăнманччĕ, кĕсье телефонĕсем сутатчĕ. Унпа çулталăк пĕрле пурăнтăмăр. Манăн иккĕмĕш хут качча тухас та килместчĕ, Дэмьен çине тăчĕ. Питĕ чаплă туй кĕрлеттертĕмĕр. Анчах та манăн ĕçе чăтаймарĕ вăл – питĕ кĕвĕçчĕ.

**– Дэмьене ăнланма пулать – малтанхи ĕççенче эсĕ тăтăшах хывăнаттăн.**

– Пĕрремĕш роле эпĕ 24 çулта калăпланă. Дайен Пертран режиссер мана роль мĕнле шанса панинчен халĕ те тĕлĕнетĕп – эпĕ ун чух нимĕн те тума пĕлмен вĕт. Голливудра ўкернĕ "Хитмэн" фильмра манăн тата ытларах хывăнма тиврĕ.

## "Бонд хĕрĕ"

**– "Квант милосердия" фильмра Дэниел Крейгпа выляма вара сана 400 актриса хушшинче суйласа илчĕç!**

– Çакна эпĕ раштав уявĕн каçĕнче 2007 çулта пĕлтĕм. Вăт ку парне! Мана суйласа илессе кĕтмен те. Каярахпа режиссер каланă тăрăх, эпĕ питех пăлханманни килĕшнĕ иккен ăна.

**– 007 агентпа пĕрле выляма тўр килнĕ актрисăсен шăпи пурин те пĕр евĕрлĕ – "Бонд хĕрĕ" пĕлтерĕшлĕ пĕртен-пĕр роль пулса юлнă вĕсен. Сана та çакăн пек шăпа кĕтесси хăратмарĕ-и?**

– Малтанах хăрас шухăш та пулман. Анчах та каярахпа пурте çак ыйтăва пама пуçларĕç... Манăн ĕмĕрлĕхех "Бонд хĕрĕ" пулса юлас килместчĕ-ха. Кĕрешме вĕрентĕм, малашне роль сĕнекен тупăнсан "çук" теме хăнăхрăм. Каярахпа чăнласах пĕлтерĕшлĕ сăнарсем тупăнма пуçларĕç.

**– Том Круз пĕрле выляма сĕннĕ авă...**

– Эпĕ унпа хутшăнса курманччĕ. Ўкерме пуçличчен кăна тĕл пултăмăр. Ăслă тыткалама тăрăшрăм хама. Круз вара мана тахçанах пĕлнĕ çын пек калаçма пуçларĕ. Вăл тĕлĕнмелле çын, йăлт асăрхать, пурне те пулăшма тăрăшать – актерсене кăна мар, ўкерў ушкăнĕнчи пур çынна та. Çавăнпах-тăр ун патне туртăнаççĕ, унпа ĕçлеме кăмăлласçĕ.

Эпĕ пуринчен те вĕренме тăрăшатăп. Пирс Броснан, Колин Фаррел, Вуди Харрелсон, Кристофер Уокен, Мартин Макдон, Бен Эффлек, Хавьер Бардем, Терренс Малик – манăн вĕрентекенсем. Сăмах май, Малик патĕнче чи чаплă çăлтăрсем те тўлевсĕрех ўкерĕнме хатĕр. Çав шутра Брэд Питт та.

## Качча тухнă вĕт-ха!

**– Эсĕ нумаях пулмасть савнă çыннупа уйрăлнă теççĕ...**

– Эпĕ юратăва ĕненетĕп. Анчах та арçын тĕнчи хĕрарăмăнне шалтан аркатма пуçласан ку хутшăнусене пăрахăçламалла. Çакăншăн Дэнни Хьюстон хăй айăплă мар – вăл çапла çын, çавă кăна. Эпĕ хам пирки вăйлă, ăна пулăшма пултаратăп тесе шухăшланăччĕ...

**– "Вăл никампа та пурăнма пултараймасть, иккĕ качча тухрĕ, иккĕшĕнче те – ăнăçсăр..." Çак сăмахсем пирки тата мĕн шухăшлатăн?**

– Хĕрарăм иккĕ качча тухса иккĕ уйрăлни телейсĕрлĕх-и вара? Хăть 10 уйрăлам! Шăпа аркатнă хĕрарăм пек курăнатăп-им-ха эпĕ? Качча тухнă вĕт-ха, апла мана асăрханă, апла эпĕ юрăхсăр хĕрарăмах мар. Мĕн чухлĕ чиперкке пĕр хут та çемье çавăраймасть! Ăнăçсăр упăшкапа ĕмĕр тăршшĕпех асапланса пурăнни лайăхрах-им тата?

## Хĕрарăмăн ачин телейĕшĕн пурăнмалла

**– Амăшĕн сăнарне те калăпланă эсĕ фильмра...**

– Хамăн савнă çыннăн хĕрачине 3 çул пăхни пулăшрĕ мана ку сăнарта. Хамăн та çуратас килмест-и тесшĕн-ха ĕнтĕ... Пĕлетĕр-и: мана халĕ 100 проценчĕпех ирĕклĕх кирлĕ. Ача çуралсассăн вара унăн телейĕшĕн кăна пурăнмалла хĕрарăмăн.

**– Çапах та пĕлес килет: арçынра мĕн илĕртет сана?**

– Лўчĕркенчĕк тумлă арçынна килĕштерместĕп. Анчах та çакна килĕштерекен арçынсене юратнă эпĕ. Юратнă чухне вара асăрхамастăн. Асăрхасассăн та тытатăн та якатса хуратăн япалине. Диван çинчен çĕкленмен кахалсене вара чăтма пултараймастăп.

**– Апат пĕçерекен арçынсене вара...**

– Ку енĕпе пултаруллă арçын кама ан килĕштĕр?

**– Арçынна мĕн вулаттарас килет?**

– Хĕрарăма ăнланма пулăшакан кĕнекене! Пурнăç мĕн тери ансатланĕччĕ вара...



– Алло! Эсĕ-и ку, чунăм? Эпĕ мĕн-ха... çурт хăпартрăм, йывăç лартрăм, кил...

* * *

Психоаналитик патĕнче пултăм. Манăн пурнăç çинчен каласа кăтартма ыйтрĕ. Малтан макăрчĕ, унтан кулчĕ. Вĕçĕнче вара: "Çитес канмалли куна манăн та сирĕнпе пĕрле ирттерме юрать-и?" – тесе ыйтрĕ.

* * *

ПАИ иртсе пыракан машинăна чарать. Водителе багажника уçма ыйтаççĕ. Унта вара 10 пысăк çĕçĕ выртать.

– Мĕн тума кирлĕ сире çавăн чухлĕ хĕç-пăшал?

– Эпĕ – жонглер, вĕсемпе хĕç-пăшал пек мар, циркра усă куратăп.

Инспектор ĕненмест, кăтартма ыйтать.

Çав вăхăтра çул хĕррипе тепĕр машина иртсе пырать.

– Юрать ĕçме пăрахрăм, – тет унăн рулĕ умĕнчи арçын юнашар ларса пыракан юлташне. – Кур-ха мĕнлерех тест шухăшласа кăларнă!

* * *

Права илсенех... танк туянатăп-ха та... тӳрех темиçе адреспа кĕрсе тухăп... ахаль кăна... сывлăх сунмашкăн...

* * *

Хĕлле ытла та сивĕ, çуркунне ытла та йĕпе, çулла ытла та шăрăх, кĕркунне ытла та пылчăклă... Çавăнпах çулталăкĕпех килтен тухмастăп.

* * *

Арăм ним тума аптранипе пылесоса хута ярсан пирĕн килте перфоратор çуккишĕн савăнса кăна выртатăп.

* * *

Ачасем – пирĕн савăнăç, арçынсем – пирĕн вăйсăрлăх... Вăйсăрлăхна самантлăха кăтартатăн та кайран ĕмĕр тăршшĕпех савăнса кăна пурăнатăн.

* * *

Çĕр варринче Вовочка вăранса каять те амăшне аптратать:

– Анне, юмах каласа парха!

– Çывăр, – хăтăрса тăкать амăшĕ. – Акă ирхине аçу килет те иксĕмĕре те çавăн пек юмах каласа кăтартать!

* * *

Такăр асфальт çинче темĕн те пĕр çырса хунине тăтăшах курма пулать: "Эпĕ сана юрататăп!", "Эсĕ манăн телей!", "Тавах эсĕ пурришĕн!" Такăр çул чăнласах телей çав, ăна юратмасăр май çук!

* * *

– Ыран шкула аслаçу килтĕр!

– Атте пуль...

– Çук, аслаçу – эпĕ ăна унăн ывăлĕ сана киле панă ĕçсенче мĕнле йăнăшсем тунине кăтартасшăн!

* * *

Качча пачах та тухмалла мар пулĕ тесе шухăшларăмха – пĕрне суйлатăн та ыттисем кӳренеççĕ.

* * *

– Ĕнер упăшкапа пĕрле футбол пăхрăм.

– Кам вылярĕ вара?

– Пĕлместĕп. Упăшкана ĕненес тĕк – намăссăр кашкăрсем кукăр уралла качака такисемпе.

* * *

Редакцие килнĕ çыруран. Çак кунсенче полици ĕçченĕсем манăн сăмакун аппаратне туртса илчĕç. Калăр-ха: тăрантаракана çухатнине пула халĕ мана пенси пама пултараççĕ-и?

* * *

Пĕри кӳршине хăйĕн çĕнĕ çуртне кăтартать.

– Кунта апатланмалли пӳлĕм... Куратăн-и, мĕн пысăкăш сĕтел – унта, тур сыхлатăр! – харăсах 20 çын вырнаçма пултарать.

* * *

Хĕвеллĕ ир. Паркра уçăлса çӳрекен арçын хыççăн йытă чупать. Полици ĕçченĕ вĕсене курсан йытта кăкарма ыйтать. Арçын пĕр сăмах та чĕнмесĕр малаллах утать. Йытă – ун хыççăн. Полицейски те – вĕсем хыççăн. Сассине хăпартсах йытта кăкарма, унсăрăн штраф тӳлеттересси пирки калать. Арçын çаплах чĕнмест. Полицейски тарăхсах каять, темĕн туртса кăларать, çырать, хутне арçынна парать: "Штраф тӳлемелли квитанци ку!" "Мĕншĕн тӳлемелле-ха манăн? – тĕлĕнет арçын. – Ку манăн йытă мар вĕт". "Мĕнле сирĕн йытă мар? Апла тăк мĕншĕн сирĕн хыççăн чупать вăл?" – "Ăçтан пĕлес-ха манăн? Эсир те акă паçăртанпах ман хыççăн чупатăр..."

* * *

Каларăм вĕт-ха упăшкана: "Атя çынсем пек шăппăн уйрăлатпăр", – тесе. Çук вĕт, итлемерĕ – купăсçăпа таврăнчĕ, хăй ӳсĕр, ку çитмен, юлташĕсене сĕтĕрсе килнĕ...

* * *

– Атте, мĕншĕн эпир лавккана апат-çимĕç туянма çĕрле килтĕмĕр?

– Ан шавла, кас атя решеткене.

* * *

Идеал шайĕнчи хĕрарăма шыратăр-и? Сирĕн, арçынсен, аяк пĕрчи идеал шайĕнче пулманшăн кам айăплă-ха?

* * *

Тĕл пулсан "мĕнле пурнăçсем?" тесе ыйтакансем тĕлĕнтереççĕ – пурте пĕр çĕршыврах пурăнмастпăр-и вара?

* * *

Маларах кăна-ха арçынсем хĕрарăмшăн паттăр темĕнле ĕç те тума пултарнă – чӳречерен кĕнĕ, алла шпага тытнă...

– Çапла, улшăнчĕç хĕрарăмсем, улшăнчĕç...

## ☺И-ХИ-ХИК☺


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ĔÇ РАБОТА

**126.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев.** Т. 89613429059.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 89030662902, 89276673368. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.

**197.Бурение скважин на воду.** Опыт, качество. Т. 89656876888.

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, ВИТЫЕ ТРУБЫ.** Т.: 89278441501, 674642.

**7.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Д-ка. Т. 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Низкие цены. Т. 48-16-54.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку,** столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 8-937-952-22-11.

**138.ОКНА, ТЕПЛИЦЫ, обшивка** домов, **двери** /сталь/. Гарантия 15 л. Скидки 40 %. Т. 89196624097.

**143.ТЕПЛИЦЫ** от производителя – от 5950 руб. Т. 89276682828.

**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

**174.МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота** и др. изделия от производителя Т. 89276682828.

**180.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**232.Заменитель цельного молока** для телят и поросят. Т. 8-987-668-17-17.


## ПУКАШ ПУТИШĔСЕМ

# Тӳлевсĕр кино



Çуллахи каникулта колхоз лашисемпе сиккипе чупаттăмăр. Телевизор çукчĕ-ха ун чухне. Питĕ кино курас килетчĕ. Аслисене – 20, пире шăкăрккасене 5 пуспа кĕртетчĕç клуба. Анчах ăçта укçа?

Çур киноран укçасăрах кĕме май пурччĕ. Выртмаранах килеттĕмĕр унта. Лаша утланса килсен чӳречеренех курма пулатчĕ. Сисрĕç çакна – кантăка чаршавпа карма тытăнчĕç. Пĕтрĕ тӳлевсĕр кино курасси!

Выртмаран та йăпăр-япăр ямастчĕç аслисем. Вутшанкă пухса вучаха сӳнме памалла мар-çке, юлан утсем калча çине хăпарасран та сыхламалла. Çапла иртрĕ аттесĕр асаплă ачалăх...

**Анатолий МАКСИМОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.


**«ХЫПАР»**

Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ**

**Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ**

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

**Çырăнмалли индекс: 11515**

**Редактор – М.М.ИЛЬИНА**

**Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА**

**Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.**

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07 **Электрон почти:** hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 10.04.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8305. Заказ 1347.